Республиканская
библиотека
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаҫачĕ

1953 ҫул
Январь
24
ШĂМАТКУН
№ 16 (8925)
35-мĕш ҫул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

СССР халăх хуҫалăхне малалла аталантармалли государство планне 1952 ҫулта тултарни ҫинчен. СССР Министрĕсен Совечĕ ҫумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтерни (1—2 стр.).

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. Л. Ф. Тимашук врача Ленин орденĕпе награднăласси ҫинчен (1 стр.).

Финанс работникĕсен канашлăвĕ (2 стр.).

Н. Волков.—«Стахановец» стена хаҫат 25 ҫул тултарчĕ (2 стр.).

Вырăнти Советсене депутата суйлама кандидатсем тăратни (3 стр.).

ТАВАН ҪĔРШЫВА ЙЫВĂҪ ЫТЛАРАХ ХАТЕРЛЕСЕ ПАРАР! **Н. Цветков.**—Татăклă улшăну тумалла (3 стр.).

Е. Семенов.—Ҫулпуҫ сăмахĕ ҫинчен ирттернĕ занятии (3 стр.).

Урăх ҫĕршывсенче Ленин кунĕсене паллă тунă (4 стр.).

Корейăри ĕҫсем (4 стр.).

Американецсен ҫĕнĕ провокацийĕ. Китайăн сывлăшри чиккисене пăсни (4 стр.).

США-ри ҫĕнĕ правительство (4 стр.).

Суйлава хатĕрленмелли организациллĕ-техникăллă ĕҫсене вăхăтра туса ҫитерер

Вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленес ĕҫ анлă сарăлса пырать. Ĕҫсыннисем хăйсен пухăвĕсенче вырăнти Советсене депутата суйлама рабочи класĕн, колхоз хресченĕсен, интеллигенцин чи лайăх представителĕсене, суйлавҫăсен шанăҫне тивĕҫлĕ, коммунизм тăвассишĕн чунтан-чĕререн тăрăшса ĕҫлекенсене кандидата тăратаҫҫĕ.

Вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленес ĕҫ массăсен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ нихҫанхинчен ытларах ўснĕ вăхăтра пулса пырать. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем, Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ хавхалантарнипе ĕҫре ҫĕнĕ ҫитĕнўсем тăвассишĕн кĕрешсе, совет ҫыннисем хăйсем коммунизм ĕҫне чĕререн парăнса тăнине, сталинла пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăхри хисеплĕ те пысăк заданисене срокчен пурнăҫлама хатĕр тăнине кăтартса параҫҫĕ.

Мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле пирĕн республикăри ĕҫсыннисем те умра тăракан хуҫалăхлă-политикăллă задачăсене ăнăҫлă пурнăҫлассишĕн тимлĕ ĕҫлеҫҫĕ. Кун ҫинчен республикăри заводсенче, фабрикăсенче, колхозсенче, машина-трактор станцийĕсенче вырăнти Советсен суйлавĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту анлă сарăлни калать.

Вырăнти Советсен иртнĕ суйлавĕ пулнăранпа республикăри хуласемпе ялсенче улшăнусем чылай пулчĕҫ. Хуласенче ҫĕнĕ кварталсем, урамсем пулса тăчĕҫ. Пĕчĕк колхозсене пĕрлештерсе пысăк колхозсем тунă хыҫҫăн, хăшпĕр хула, поселок, ял Совечĕсен территорийĕсен чиккисем улшăнчĕҫ. Ҫавна май ҫĕнĕ суйлав округĕсем тума, округсенче суйлав комиссийĕсем организациленĕ. Суйлав умĕнхи организациллĕ-техникăллă ĕҫсен пĕлтерĕшĕ те ўсрĕ.

Чăваш АССР ĕҫсынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйламалли положени вăл—организациллĕ-техникăллă ĕҫсен программи. Ăна тĕрĕс пурнăҫласа пыни совет гражданĕсене Конституци панă суйлав правипе туллин усă курма май парать. Положенире каланă йĕркесене ҫирĕп тытса пыни вăл—суйлавҫăшăн, социализмлă демократизм принципĕсене пурнăҫлассишĕн тăрăшни пулать.

Суйлав кампанийĕнче пур ĕҫсен пĕлтерĕшĕ те пысăк. Ҫавăнпа та хальхи вăхăтра партипе совет организацийĕсен ĕҫĕнче суйлава хатĕрленес ĕҫ тĕп вырăнта тăмалла. Агитациллĕ-массăллă ĕҫе вăйлатнипе пĕрлех, организациллĕ-техникăллă ĕҫсене вăхăтра туса пыма тăрăшас пулать. Суйлава йĕркеллĕ тата организованно ирттерме лайăх условисем туса парасси—партипе совет органĕсен тивĕҫĕ.

Вырăнти Советсене суйланă чухне кашни районта ҫĕршер депутат суйламалла, пĕр суйлав участокĕнчех темиҫе округран ял, поселок, хула, район Совечĕсене депутатсем суйлас тĕлĕшпе сасăламалла пулать. Ҫакна май суйлавҫăсене суйлав законĕ ҫинчен тĕплĕн ăнлантарса парас пулать.

Ҫак кунсенчех суйлавҫăсен списокĕсене тĕрĕслес ĕҫе организацилемелле. Списоксем ҫинче Совет трриторийĕнче яланах пурăнакан тата вăхăтлăха пынă пур суйлавҫăсен ячĕсем те пулмалла. Списокра кашни суйлавҫăн ятне, ашшĕ ятне, хушаматне тĕрĕс ҫырмалла. Суйлавҫăсен списокне тăвасси, ăна тĕрĕслесси—техникăлла ĕҫ кăна мар, вăл—политикăллă пысăк ĕҫ.

Анчах хăшпĕр район, хула, ял, поселок Совечĕсен исполкомĕсем суйлавҫăсен списокĕсене тăвас ĕҫ ҫине ҫиелтен пăхаҫҫĕ. Ҫавна пула списоксенче йăнăшсем пур. Канаш хулинчи суйлавҫăсен списокĕсенче 1935 ҫулта ҫуралнă 12 суйлавҫăнне вĕсем хăш уйăхра тата хăш кун ҫуралнине кăтартман, 23 суйлавҫăн хушамачĕсем тĕлне вĕсем хăҫан ҫурални ҫинчен пачах ҫырман. Чăваш АССР-ĕ 30 ҫул тултарни ятлă урамри сакăр хваттерлĕ ҫуртра пурăнакан суйлавҫăсене списока кĕртмесĕр хăварнă. Йывăҫ склачĕн, автобазăн, ҫар комиссариачĕн ҫурчĕсенче пурăнакан суйлавҫăсене пачах списока кĕртмен.

Йĕпреҫ районĕнчи Пучинкепе Хурамал ял Совечĕсенче суйлавҫăсен списокĕсене алфавит тăрăх туман.

Организациллĕ-техникăллă ĕҫсенчи тепĕр пысăк ҫитменлĕх вăл суйлав участокĕсене йĕркелеме кирлĕ пек тăрăшманни пулать. Сăмахран, Канаш хулинче участоксенчи суйлав комиссийĕсем ĕҫлемелли ҫуртсене йĕркелесе ҫитермен, участоксенчи комиссисем ĕҫлеме тытăнман. Йĕпреҫ районĕнчи чылай ял Совечĕсенче суйлавра кирлĕ оборудование, халиччен усă курнине, сыхласа усраман. Суйлав участокĕсен ҫурчĕсене ăшăтма вутă хатĕрлемен, лампăсем тата краҫҫын ҫук.

Суйлава ăнăҫлă ирттересси суйлавҫăсене партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем, Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕ ҫинчен, СССР, РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсем тата суйлав законĕ ҫинчен тĕплĕн ăнлантарса панинчен килет. Анчах хăшпĕр агитпунктсенче литература ҫителĕксĕр. Советски районĕнчи Асламас ял Советĕнчи агитаторсен «Чăваш АССР ĕҫсынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйламалли Положени» те ҫук. Советскинчи кĕнеке магазинĕнче суйлав Положенийĕ 400 экземпляр пур, анчах ҫав кĕнекесене сутас ĕҫе организацилемен. Чылай агитпунктсенче нагляднăй агитацие кирлĕ пек йĕркелесе ҫитермен.

Кун пек ҫитменлĕхсем ытти районсенче те пур. Вĕсене хăвăртрах пĕтерме тивĕҫлĕ мерăсем йышăнас пулать. Ҫакна асра тытмалла: вырăнти Советсен суйлавĕ вăл—пĕтĕм халăх уявĕ. Партипе совет, профсоюзпа комсомол организацийĕсен ҫак уява лайăх хатĕрленсе ирттерме пĕтĕм актива хутшăнтарас пулать.

Суйлава хатĕрленсе, ĕҫсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен исполкомĕсем халăха Советсен ĕҫĕсем ҫинчен, хуҫалăхпа культура строительствине мĕнле пурнăҫласа пыни, бюджета мĕнле ĕҫе кĕртсе пыни ҫинчен каласа кăтартма тивĕҫлĕ. Исполкомсен работникĕсем суйлавҫăсен сĕнĕвĕсене шута илсе пымалла, вĕсен паха сĕнĕвĕсене пурнăҫлас ĕҫе организацилемелле, сĕнўсене ҫийĕнчех Совет исполкомĕн ларăвĕнче пăхса тухмалла. Пухусенче самокритикăна тата аялтан килекен критикăна анлă сарни вырăнти Советсемпе хуҫалăх организацийĕсен ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене палăртма, ҫав ҫитменлĕхсене пĕтерме, сталинла пилĕк ҫуллăх плана пурнăҫлама ĕҫсынни массисене мобилизацилеме пулăштăр.

Суйлава организациллĕ-техникăллă ĕҫсем енĕпе тĕплĕн хатĕрленесси—питĕ ответлă ĕҫ. Ҫавăнпа та ку ĕҫре пĕтĕм ответлăха туйса ĕҫлемелле. Ĕҫ мĕнле пынине—суйлавҫăсен списокĕсене мĕнле тунине, агитпунктсене мĕнле йĕркеленине, суйлав участокĕсенче ĕҫсем мĕнлине, суйлав докуменчĕсене хатĕрлес ĕҫ мĕнле пынине, сасăламалли кун валли транспорт хатĕрленине, ҫыхăну мĕнле ĕҫленине тăтăшах тĕрĕслес пулать.

Пирĕн халăх вырăнти Советсен суйлавне хамăрăн тăван парти—Коммунистсен партийĕ тавра, аслă ҫулпуҫăмăр Сталин юлташ тавра тачă пĕтĕҫнипе пырать. Суйлава активлă хутшăнса, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăласа, совет халăхĕ хăйĕн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхне, коммунизм тăвассишĕн тимлĕ кĕрешме хатĕр пулнине тепĕр хут кăтартса парĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

Л. Ф. ТИМАШУК ВРАЧА ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ НАГРАДĂЛАССИ ҪИНЧЕН

Ҫынвĕлерен-врачсене тăрă шыв ҫине кăларас ĕҫре Правительствăна пулăшнăшăн Лидия Федосеевна Тимашук врача **ЛЕНИН** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1953 ҫулхи январĕн 20-мĕшĕ.

В. И. Ленин вилнĕренпе 29 ҫул тултарнă май Шупашкарта пулса иртнĕ хурлăхлă-чаплă лару

Январĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарта, Чăваш государство академи театрĕнче, Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 29 ҫул тултарнă май КПСС обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн, ВЛКСМ обкомĕпе хула комитечĕн, Чăвашоблпрофсовет президиумĕн парти, совет, комсомол, профсоюз тата обществăллă организацисен представителĕсемпе пĕрле ирттернĕ хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Хурлăхлă-чаплă ларăва КПСС хула комитечĕн секретарĕ Никитин юлташ уҫать. Вăл Владимир Ильич Ленина ура ҫине тăрса хисеплеме чĕнет. Пурте ура ҫине тăраҫҫĕ.

Ленин вилнĕренпе 29 ҫул ҫитни ҫинчен ларура КПСС обкомĕн секретарĕ Шмаков юлташ доклад туса пачĕ.

Лару халăхсен аслă ҫулпуҫĕпе учителĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ патне саламлă ҫыру яма йышăнчĕ.

СССР халăх хуҫалăхне малалла аталантармалли государство планне 1952 ҫулта тултарни ҫинчен

СССР Министрĕсен Совечĕ ҫумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтерни

1952 ҫулта промышленность, ялхуҫалăхĕ тата транспорт аталанса пынине, капитальнăй строительство мĕн чухлĕ тунине, тавар ҫаврăнăшĕ вăйланнине, халăх пурнăҫĕ лайăхланнине тата унăн культурин ўсĕмне ҫак цифрăсем кăтартса параҫҫĕ:

I. Промышленность производство планне тултарни

Пĕтĕм промышленность 1952 ҫулта продукци туса кăлармалли ҫулталăкри плана пĕтĕмĕшпе 101 процент тултарнă. Уйрăм министерствăсем промышленность продукцийĕ туса кăлармалли ҫулталăкри плана ҫакăн чухлĕ тултарнă:

	1952 ҫулхи плана тултарнă (процентпа)
Хура металлурги министерстви	103
Тĕслĕ металлурги министерстви	100
Ҫĕр кăмрăк промышленность министерстви	100,2
Нефть промышленность министерстви	100,7
Электростанцисен министерстви	100,9
Хими промышленность министерстви	102
Электропромышленность министерстви	102
Ҫыхăну хатĕрĕсем тăвакан промышленность министерстви	100,9
Йывăр машинăсем тăвакан промышленность министерстви	99
Автомобильпе трактор промышленность министерстви	102
Станоксем тăвакан промышленность министерстви	100,5
Машинăсемпе приборсем тăвакан промышленность министерстви	100,7
Строительствăпа ҫул-йĕр машинисем тăвакан промышленность министерстви	104
Транспорт машинисем тăвакан промышленность министерстви	96
Ялхуҫалăх машинисем тăвакан промышленность министерстви	96
СССР строительство материалĕсен промышленность министерстви	99
СССР Вăрман промышленность министерстви	90
Хут тата йывăҫ япаласем тăвакан промышленность министерстви	102
СССР Ҫăмăл промышленность министерстви	100,6
СССР Пулă промышленность министерстви	94
СССР Аш-какайпа сĕт-ҫу промышленность министерстви	100,5
СССР Апат-ҫимĕҫ промышленность министерстви	103
СССР Ҫĕр мамăк министерствин промышленность предприятийĕсем	99,9
Ҫул-йĕр министерствин промышленность предприятийĕсем	100
СССР Сывлăх министерствин промышленность предприятийĕсем	103
СССР Кинематографи министерствин промышленность предприятийĕсем	107
СССР Министрĕсен Совечĕ ҫумĕнчи полиграфи промышленность, издательствăсен тата кĕнеке суту-илĕвĕн главнăй управленийĕн промышленность предприятийĕсем	104
Союзлă республикăсенчи вырăнти промышленность тата вырăнти топливо промышленность министерствисем	103
Промысла кооперацийĕ	102

1952 ҫулта планран ирттерсе промышленность продукцийĕ чылай туса кăларнă, вăл шутра: чугун, хурҫă, прокат, хурҫă трубасем, хăшпĕр йышши тĕслĕ металсем, ҫĕр кăмрăкĕ, нефть, бензин, краҫҫын, дизель топливи, ҫĕр айĕнчи газ, силовой трансформаторсем, ҫăмăл автомобильсем, шарикоподшипниксем, экскаваторсем, бульдозерсем, металл касмалли станоксем, каустически тата кальцинированнăй сода, минераллă удобренисем, ялхуҫалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсемпе тата ҫумкурăксемпе кĕрешмелли яд-химикатсем, сăрăсем тата ытти химикатсем, автопокрышкăсем, чўрече кантăкĕ, шифер, хут, ҫăм тата пурҫăн пир-авăр, чăлха-носкисем, велосипедсем, фотоаппаратсем, пианино тата рояльсем, ҫавăн пекех тата сыр, ҫăратнă сĕт, премĕк-канфет, чей, виноград эрехĕ, папирос, шăрпăк тата ытти промышленность продукцийĕ.

Иртнĕ ҫулталăкра промышленность продукцийĕн пахалăхĕ ўснĕ, анчах хăшпĕр предприятисем продукци пахалăхне ўстерме тата продукци сортлăхне лайăхлатма кăтартса панă задание пурнăҫламаҫҫĕ-ха, производствăра брак туса кăлараҫҫĕ.

Промышленноҫăн чылай отраслĕсенче кăтартса панă ассортиментлă продукци туса кăлармалли плана пурнăҫламаҫҫĕ. Сăмахран, йывăр машинăсем тăвакан промышленность министерстви 1952 ҫулта хăшпĕр йышши энергетика оборудованийĕ туса кăлармалли плана, станоксем тăвакан промышленность министерстви—хăшпĕр йышши станоксем туса кăлармалли, ялхуҫалăх машинисем тăвакан промышленность министерстви — хăшпĕр йышши ялхуҫалăх машинисем, СССР строительство материалĕсен промышленность министерстви—хăшпĕр йышши цемент туса кăлармалли плана тултарман. СССР Вăрман промышленность министерстви ĕҫе юрăхлă йывăҫ турттарса кăлармалли плана тултарман.

II. Промышленность продукцийĕ туса кăларасси ўсни

1952 ҫулта промышленность чи паха йышши продукци туса кăларасси, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, ҫакăн пек улшăннă:

	1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, ҫакăн чухлĕ туса кăларнă (процентпа)
Чугун	114
Хурҫă	110
Прокат	112
Чугун ҫул рельсĕсем	153
Хурҫă трубасем	114
Пăхăр	115
Цинк	124
Тăхлан	117
Ҫĕр кăмрăкĕ	107
Нефть	112
Бензин	126
Дизель топливи	134
Ҫĕр айĕнчи газ	102
Электроэнерги	113
Троллейбуссем	11,9 хут
Автомобильсем	107
Шарикоподшипниксем	117
Нефть аппаратури	144
Металлурги оборудованийĕ	112
Пĕр куркаллă пысăк экскаваторсем	107
Нумай куркаллă экскаваторсем	122
Пăс турбинисем	108
Пысăк гидротурбинăсем	124
Турбогенераторсем	130
Гидрогенераторсем	138
Пысăк электричество машинисем	107
Автопогрузчиксем	103
Электромоторсем	106
Электролампăсем	109
Металл касмалли станоксем—Станоксем тăвакан промышленность министерстви	103
Хими оборудованийĕ	128
Ҫип арламалли машинăсем	118
Пир тĕртмелли машинăсем	139
Шут шутламалли машинăсем	153
Тракторсем	107
Сахăр кăшманĕ кăлармалли комбайнсем	119
Тракторпа утă ҫулмалли машинăсем	120
Тырă тасатмалли машинăсем	107
Каустически сода	111
Кальцинированнăй сода	121
Минераллă удобренисем	108
Ялхуҫалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсемпе тата ҫумкурăксемпе кĕрешмелли яд-химикатсем	145
Синтетически сăрăсем	108
Синтетически каучук	109
Автопокрышкăсем	101
Хут	109
Цемент	115
Шифер	126
Ҫурт ҫине витмелли ҫемҫе япаласем	114
Кирпĕч	119
Стандартлă ҫуртсем	127
Велосипедсем	143
Радиоприемниксем	106
Патефонсем	123
Ҫĕвĕ машинисем	120
Сехетсем	109
Фотоаппаратсем	128
Пианино тата рояльсем	118
Ҫĕр мамăкĕ	107
Ҫĕр мамăк пир-аварĕ	106
Ҫăм пир-авăр	108
Пурҫăн пир-авăр	129
Аш-какай	115
Выльăх-чĕрлĕх ҫăвĕ	104
Сĕт продукчĕсем	105
Ҫăратнă сĕт	128
Ўсентăран ҫăвĕ	109
Сыр	115
Сахăр	103
Премĕк-канфет	112
Консервсем	111
Чей	112
Супăнь	102
Спирт	110
Папирос	112
Виноград эрехĕ	128
Сăра	106

ССР Союзĕн пĕтĕм промышленноҫĕ 1952 ҫулта продукци туса кăларни, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 11 процент ўснĕ.

1952 ҫулта ССР Союзĕн халăх хуҫалăхĕ, государствăн снабжени планĕ тăрăх, чĕртавар, материалсем, топливо, электроэнерги тата оборудовани 1951 ҫулхинчен чылай нумайрах илнĕ.

Иртнĕ ҫулталăкра промышленноҫра оборудованипе усă курасси малалла лайăхланса пынă. Хура металлургире домна кăмакисен усăллă вырăнĕпе усă курасси иртнĕ ҫулталăкра, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 5 процент лайăхланнă. Мартен кăмакисен тĕпĕсен кашни тăваткал метрĕнче хурҫă шăратса кăларасси 3 процент ўснĕ. Нефть промышленность министерствин предприятийĕсенче ҫĕре пăраласа шăтарассин хăвăртлăхĕ, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 4 процент ўснĕ. Нефть тасатакан заводсенче оборудовани хăвачĕпе усă курасси лайăхланнă, тасатакан нефтьрен ҫутă тĕслĕ нефть продукчĕсем тухнин проценчĕ ўснĕ. Ҫĕр кăмрăк промышленность министерствин предприятийĕсенче кăмрăк кăлармалли «Донбасс» комбайнсемпе тухăҫлăрах ĕҫленĕ. Электростанцисен министерствин предприятийĕсенче электроэнерги туса кăларма топливо 2,3 процент сахалрах расходланă. Хими промышленноҫĕнче синтетически аммиак тата кўкĕрт кислоти туса кăлармалли оборудовани хăвачĕпе усă курасси лайăхланнă, ҫавăн пекех цемент промышленноҫĕнче те оборудовани хăвачĕпе лайăхрах усă курнă. Ҫĕр мамăк пир-авăр, ҫăм тата пурҫăн пир-авăр тĕртекен, ҫыхнă кĕпе-тумтир туса кăларакан промышленноҫра та оборудованипе усă курасси лайăхланнă. Анчах промышленноҫăн чылай отраслĕсенче, уйрăмах машинăсем тăвакан промышленноҫра тата вăрман промышленноҫĕнче, усă курман резервсем чылай пур-ха.

1952 ҫулта кашни пĕр япалана туса кăларма тухакан чĕртавар, топливо тата электроэнерги расхочĕ, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, чакнă, анчах чылай предприятисенче чĕртаварпа материалсем нормăпа кăтартса панинчен ытлашши расходлаҫҫĕ-ха.

1952 ҫулта промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакĕ, чĕртавар, материалсен, топливо тата электроэнергипе тепловой энерги хакне, грузсем турттармалли хака йўнетнине шута илсен, 8 процент ытла чакнă.

III. Халăх хуҫалăхне ҫĕнĕ техника кĕртсе пыни

1952 ҫулта, малтанхи ҫулсенчи пекех, социализмлă производство ўссе тата лайăхланса пырасси совет наукипе техникин ҫитĕнĕвĕсемпе усă курнă никĕс ҫинче пулса пынă.

Совет машиностроенийĕ 1952 ҫулта ҫĕнĕ йышши тата ҫĕнĕ маркăллă машинăсемпе механизмсем 600 яхăн тунă, вĕсем халăх хуҫалăхне техника енĕпе малалла вăйлатса пыма май параҫҫĕ. Ҫав шутра станоксем тăвакан промышленность металл касакан тата йывăҫ япаласем тумалли станоксемпе тимĕрҫĕ ĕҫне тумалли машинăсем 200 ытла ĕҫе кĕртнĕ, ҫак шутра пысăк тухăҫлăхпа ĕҫлекен ҫĕнĕ конструкциллĕ питĕ пысăк тата йывăр станоксем, станок-автоматсемпе полуавтоматсем, автоматикăллă станоксен ҫĕнĕ линийĕсем пур.

Ҫĕр кăмрăкĕ ҫўхе сийĕ выртакан шахтăсенче йывăр ĕҫсене механизацилеме кăмрăк кăлармалли ҫĕнĕ йышши машинăсем тата нефть кăлармалли ҫĕнĕ вырăнсем тупма разведка тумалли оборудовани туса кăларнă.

Электростанцисем, металлурги, хими промышленноҫĕ тата промышленноҫăн ытти отраслĕсем валли ҫĕнĕ йышши оборудовани туса кăларнă, вăл шутра перекĕтлĕрех ĕҫлекен гидравлически тата пăс турбинисем, пысăк тухăҫлăхпа ĕҫлесе прокат тăвакан оборудовани, пысăк температурăна тўсекен сплавсене тата сахал углеродлă хурҫăсене сварка тумалли машинăсем, производство процесĕсене автоматла майпа контроллесе тата йĕркелесе тăмалли приборсем туса кăларнă.

Ҫĕнĕ йышши хăватлă скреперсем, бульдозерсем тата ытти ҫĕр чавмалли машинăсем, ҫавăн пекех тата экскаваторсем, строительствăра ҫĕр чавнă чухне тата грузсем тиесе пушатнă чухне ĕҫе механизацилемелли крансем туса кăларнă.

Ялхуҫалăхĕнче тĕштырăсемпе техникăллă культурăсем акса тунă чухне ĕҫе механизацилемелли, ҫавăн пекех тата выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕҫе механизацилемелли ҫĕнĕ конструкциллĕ машинăсем, механизмсем тата ытти ĕҫ хатĕрĕсем туса кăларма тытăннă; вăл шутра ҫĕр мамăкĕ шăвармасăр ўстерекен районсем валли ҫĕр мамăкĕ пухса кĕртмелли самоходнăй пневматикăллă машина, силос тумалли культурăсене пухса кĕртмелли комбайн, утă ҫулмалли пысăк тухăҫлă машина, ялхуҫалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсемпе тата чирчĕрсемпе кĕрешмелли машинăсем туса кăларма тытăннă.

Халăх хуҫалăхĕн мĕнпур отраслĕсенче производствăна механизацилесси чылай ўснĕ.

Ҫĕр кăмрăк промышленность министерствин шахтисенче иртнĕ ҫулсенче кăмрăка катса илессине, кăмрăка тиесе илсе тухассине механизациленĕ пулнă, 1952 ҫулта вара шахтăсенче йывăр ĕҫсене малалла механизациленĕ—лавăсенче кăмрăк тиессине тата кăмрăк кăларма вырăн хатĕрленĕ чухне тухакан тăпрана тиессине механизациленĕ. Ҫав ĕҫсене механизацилени 1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, кăмрăк касса кăларас ĕҫре 25 процент, кăмрак тата тăпра тиес ĕҫре 17 процент ўснĕ. Кăмрăк кăлармалли шахтăсенче йывăҫ тĕкĕсем вырăнне металран тунă тĕкĕсем тата тимĕр-бетон тĕкĕсем лартасси малалла пулса пынă. 1952 ҫул иртнĕ тĕле кăмрăк кăлармалли тата кăмрăк касмалли машинăсен—пĕтĕмпе 2 пине яхăн машина ĕҫне инҫетрен йĕркелесе тăмалла тунă тата конвейер линийĕсем 1.600 ытла тунă.

Вăрман промышленноҫĕнче вăрман хатĕрленĕ ҫĕрте тĕп ĕҫсене механизацилесси малалла ўснĕ. 1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, СССР Вăрман промышленность министерстви тăрăх механизмсемпе ĕҫлесси ҫакăн чухлĕ ўснĕ: вăрман каснă ҫĕрте—26 процент, каснă йывăҫа турттарнă ҫĕрте—20 процент тата йывăҫ тиенĕ ҫĕрте—39 процент. Вăрман хатĕрлес ĕҫе механизацилесси ўснĕ пулин те, 1952 ҫулта вăрман промышленноҫĕ вăрман хатĕрлес ĕҫе механизацилемелли задание пĕтĕмпех тултарса ҫитереймен.

Иртнĕ ҫулталăкра чугун ҫул тата шывҫул транспорчĕнче грузсем тиессине тата пушатассине малалла механизацилесе пынă.

1952 ҫулта промышленноҫăн тĕрлĕ отраслĕсенче пысăк тухăҫлă технологи процесĕсем тата производствăна автоматизацилесси малалла аталаннă.

Хура металлурги министерствин рудникĕсенче тимĕр руди кăлармалли пысăк тухăҫлă ҫĕнĕ майсем ăнăҫлăн пурнăҫланса пынă. Чугун тата хурҫă шăратас ĕҫре те производство процесĕсене хăвăртлатса пынă, ку вăл домна кăмакисемпе тата мартен кăмакисемпе ытларах усă курма май парать. Металлургири кăмакасене ăшă режимне автоматикăллă майпа йĕркелесе тăмалли приборсемпе малалла пуянлатнă.

1952 ҫул иртнĕ тĕле электростанцисен министерствин системинчи халĕ ĕҫлекен гидроэлектростанцисен мĕнпур агрегачĕсене автоматикăллă майпа йĕркелесе тăмалла тунă. Гидроэлектростанцисене нумайăшне,—вĕсен хăвачĕ пĕтĕм гидроэлектростанцисен хăвачĕн 50 проценчĕ пулать,—телемеханика тăрăх йĕркелесе тăмалла тунă. Тепловой электростанцисенче те производство процесĕсене автоматизацилесси анлăнрах сарăлнă.

Нефть промышленноҫĕнче турбинăллă меслетпе ҫĕре пăраласа шăтарасси чылай ўснĕ. Нефть кăлармалли шăтăксене хăвăрт шăтарасси тата пĕр вăхăтрах икĕ шăтăк туса хатĕрлесси ăнăҫлăн пурнăҫланса пынă, ку вăл нефть кăлармалли шăтăксене хăвăртрах шăтарса ҫитерме тата монтаж ĕҫĕсене хăвăртрах туса ҫитерме май парать. Тăпра сийĕсем пусса тăнине пĕтермелли меслетпе нефть кăларасси малалла аталанса пынă. Пĕрре нефть кăларнă вырăнсене шыв, газ тата сывлăш тултарса, ҫав вырăнсенчех иккĕмĕш хут нефть кăларасси пурнăҫа кĕрсе пынă.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

СССР халӑх хуҫалӑхне малалла аталантармалли государство планне 1952 ҫулта тултарни ҫинчен

СССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Центральнӑй Статистика Управленийӗ пӗлтерни

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш страницӑра).

Машинӑсем тӑвас ӗҫре хурҫӑ вырӑнне тата профиллӗ прокат вырӑнне ҫӗнӗ йышши чугунпа усӑ курасси ӳснӗ. Метала хӑвӑрт меслетпе касса якатасси малалла сарӑлса пынӑ. Детальсем туса хатӗрлес тата машинӑсем, аппаратсемпе приборсем пухас ӗҫре ҫӗнӗрен поток линийӗсем тунӑ. Термически тата тимӗр-хурҫӑна хӗртмелли кӑмакасем ҫумне автоматикӑллӑ аппаратура вырнаҫтарса лартасси малалла пулса пынӑ. Технологи процесӗсенче усӑ куракан тӗрлӗрен автоматсемпе полуавтоматсен хисепӗ ӳснӗ.

Ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗ, ҫӑм пир-авӑрӗ тӗртсе кӑларакан промышленноҫра, ҫӑмӑл промышленноҫӑн ытти отраслӗсенче те пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлекен ҫӗнӗ агрегатсене, машинӑсене тата автоматсене ӗҫе кӗртсе пынӑ, ҫавӑн пекех тата чӑлха-носки, кӗпе-тумтир ҫыхакан производствӑра поток йӗркипе ӗҫлессине пурнӑҫа кӗртсе пынӑ. Апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсене автоматсемпе, автоматикӑллӑ линисемпе, ҫавӑн пекех тата производство процесӗсене контроллесе тата йӗркелесе тӑракан приборсемпе, аппаратсемпе пуянлатассине малалла туса пынӑ.

1952 ҫулта халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсенче те изобретенисемпе рационализаторла сӗнӳсен хисепӗ ӳснӗ, промышленноҫра, строительствӑра тата транспортра ӗҫҫыннисем панӑ изобретенисене, техникӑна лайӑхлатмалли тата рационализаторла сӗнӳсене 800 пине яхӑн пурнӑҫа кӗртнӗ.

IV. Ялхуҫалӑхӗ

1952 ҫулта пухса кӗртме тырӑ акнӑ лаптӑк, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 2 миллион та 765 пин гектар ытларах пулнӑ. Чи паха тӗштырӑ—тулӑ—акнӑ лаптӑк, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 3 миллион та 320 пин гектар ӳснӗ. 1952 ҫулта хлопчатник, сахӑр кӑшманӗ, хӗвелҫаврӑнӑш тата ытти техникӑллӑ культурӑсем акса тӑвасси те ӳснӗ. Выльӑхсене ҫитермелли тымарҫимӗҫсем, силос культурисем, нумай ҫул ӳсекен курӑксем акнӑ лаптӑк чылай ӳснӗ.

СССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи тырпул тухӑҫлӑхне палӑртас тӗлӗшпе ӗҫлекен Главнӑй Государственнӑй Инспекци пӗлтернӗ тӑрӑх, 1952 ҫулта тӗштырӑсемпе техникӑллӑ культурӑсен тухӑҫлӑхӗ лайӑх пулнӑ. 1952 ҫулта тӗштырӑсен пӗтӗм тухӑҫлӑхӗ 8 миллиард пӑт пулнӑ. Тулӑ тухӑҫлӑхӗ вара 1951 ҫулхинчен 23 процент пысӑкрах пулнӑ. 1951 ҫулхипе танлаштарсан, ҫӗр мамӑкӗ, сахӑр кӑшманӗ, хӗвелҫаврӑнӑш, йӗтӗн тата ытти техникӑллӑ культурӑсем, ҫавӑн пекех ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫсем нумайрах пухса илнӗ.

1952 ҫулта ялхуҫалӑхӗн материально-техникӑллӑ никӗсӗ малалла ӳснӗ тата тӗрекленсе пынӑ.

Иртнӗ ҫулта ялхуҫалӑхӗ, 15 лаша вӑйӗ тракторсем ҫине куҫарсан, 131 пин трактор, тырпул пухса кӗртмелли комбайнсем 41 пин, вӗсенчен самоходнӑй комбайнсем 21 пин, грузовой автомобильсем 57 пин, ҫӗр ӗҫлемелли хатӗрсем, тырпул акмалли, пухса кӗртмелли тата ытти ялхуҫалӑх машинисем, ҫавӑн пекех выльӑх-чӗрлӗх фермисем валли кирлӗ машинӑсемпе оборудовани 2 миллион ытла илнӗ.

Ялхуҫалӑхӗ техникӑпа пуянланса пынипе пула, колхозсемпе совхозсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсене механизацилесси тата ытларах ӳснӗ. 1952 ҫулта машина-трактор станцийӗсем колхозсенче пӗтӗм уй-хир ӗҫӗсенчен тӑватӑ пайран виҫӗ пайне хӑйсен тракторӗсемпе тата машинисемпе тунӑ. Иртнӗ ҫулта колхозсенче мӗнпур суха ӗҫӗсене тенӗ пекех тата акассине 80 процент ытла механизациленӗ. Хлопчатник, сахӑр кӑшманӗ тата ытти техникӑллӑ культурӑсем акассине пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех механизациленӗ. Колхозсенче тӗштырӑ акнӑ пӗтӗм лаптӑкран 70 процентне комбайнсемпе пухса кӗртнӗ. Сахӑр кӑшманӗ акнӑ лаптӑкран виҫӗ пайран икӗ пайне ытларах кӑшман пухса кӗртмелли комбайнсемпе тата кӑшман кӑлармалли, трактортан кӑкаракан машинӑсемпе пухса кӗртнӗ.

1952 ҫулта машина-трактор станцийӗсем колхозсенче тунӑ ялхуҫалӑх ӗҫӗсен калӑпӑшӗ чылай ӳснӗ пулин те, машина-трактор станцийӗсем ҫӗрулми кӑларас, силос хывас тата кӗрхи ҫӗртме тӑвас тӗлӗшпе плана пӗтӗмӗшпех тултарайман.

Колхозсенче шыв парса тӑрас, выльӑх апачӗ хатӗрлес, ӗне сӑвас, ҫӑм касас ӗҫсенче электроэнергипе усӑ курасси чылай ӳснӗ.

1952 ҫулта колхозсенче обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх йышӗ ҫакӑн чухлӗ ӳснӗ: ӗнесем—6 процент, сыснасем—4 процент, сурӑхсем—7 процент, лашасем—4 процент.

СССР Совхозсен министерствин совхозӗсенче иртнӗ ҫулта ӗнесен шучӗ 5 процент ӳснӗ, сыснасем—4 процент, сурӑхсем—8 процент, лашасен йышӗ—9 процент ӳснӗ.

Уй-хире хӳтӗлекен вӑрман тӑрӑхӗсем тума 1948 ҫулта йышӑннӑ плана пурнӑҫласа, Совет Союзӗн Европа пайӗнчи ҫеҫенхирлӗ тата вӑрман ҫеҫенхирлӗ районӗсенчи колхозсем, вӑрман хуҫалӑхӗсем, машина-трактор тата вӑрман станцийӗсем, ҫавӑн пекех совхозсем 1952 ҫулта 725 пин гектар ытларах лаптӑк ҫине йывӑҫ лартнӑ. Йывӑҫ лартмалли ҫулталӑкри плана ирттерсе тултарнӑ.

1952 ҫулта ҫӗре шӑварас тата шурлӑхлӑ вырӑнсенчи ҫӗре типӗтес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ.

V. Чугун ҫул, шыв ҫулӗ тӑрӑх тата автомобиль транспорчӗпе грузсем турттарасси ӳсни

Чугун ҫул транспорчӗ 1952 ҫулта грузсем турттармалли ҫулталӑк планне ирттерсе тултарнӑ. 1951 ҫулхипе танлаштарсан, груз турттарасси 9 процент ӳснӗ. Вӑтам шутпа талӑкра грузсем тиемелли пӗтӗмӗшле плана чугун ҫулсем 104 процент тултарнӑ. Анчах та хӑшпӗр чугун ҫулсем чи кирлӗ грузсем тиемелли плансене тултарайман. Вагонсен ҫаврӑнӑшне хӑвӑртлатмалли задание иртнӗ ҫулта пурнӑҫланӑ. Чугун ҫулсем ҫинче кашни тонно-километр пуҫне топливо расходласси, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 2,4 процент чакнӑ.

Шыв ҫул транспорчӗ тӑрӑх грузсем турттарасси, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 12 процент ӳснӗ, анчах ҫулталӑкри плана кӑштах тултарайман.

Тинӗс транспорчӗ тӑрӑх грузсем турттарасси 1951 ҫулхинчен 9 процент ӳснӗ. Тинӗс транспорчӗ тӑрӑх грузсем турттармалли ҫулталӑкри плана 1952 ҫулта тултарнӑ.

Автомобиль транспорчӗпе грузсем турттарасси, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 15 процент ӳснӗ.

VI. Капитальнӑй строительство ӗҫӗсем ӳсни

1951 ҫулхипе танлаштарсан, 1952 ҫулта государство тӑвакан капитальнӑй ӗҫсен пысӑкӑшӗ 111 процент пулнӑ. Электростанцисем тӑвас тӗлӗшпе пурнӑҫланӑ капитальнӑй строительство ӗҫӗсен пысӑкӑшӗ, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 126 процент, хура тата тӗслӗ металлургире капитальнӑй строительство ӗҫӗсен пысӑкӑшӗ 111 процент, ҫӗр кӑмрӑкӗпе нефть промышленноҫӗнче—105 процент, машиностроенире—112 процент, строительство материалӗсем тӑвакан промышленноҫра—109 процент, ҫӑмӑл тата апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнче—109 процент, пурӑнмалли ҫурт-йӗр строительствинче—110 процент пулнӑ.

1952 ҫулта халӑх хуҫалӑхӗн мӗнпур отраслӗсенче производствӑн ҫӗнӗ хӑвачӗсене чылай ӗҫе кӗртнӗ.

Атӑл, Дон, Днепр тата Аму-Дарья ҫинче пысӑк гидроэлектростанцисем тата ҫӗре шӑвармалли системӑсем тӑвас тӗлӗшпе 1952 ҫул валли ҫирӗплетнӗ заданисене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑ.

1952 ҫулта Атӑлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячӗпе тӑракан суднӑсем ҫӳремелли канал ӗҫлеме тытӑннӑ.

Строительство организацийӗсем 1952 ҫулта пысӑк тухӑҫлӑ машинӑсемпе механизмсем нумай илнӗ. 1951 ҫулхипе танлаштарсан, экскаваторсен шучӗ 25 процент, скреперсем — 40 процент ытла, бульдозерсем — 29 процент, башеннӑй крансен шучӗ — 70 процент ытла ӳснӗ; ҫавӑн пекех тата ытти строительнӑй машинӑсемпе механизмсен шучӗ те нумай ӳснӗ. Стройкӑсенче уйрӑм ӗҫсене механизациленинчен строительство ӗҫӗсене комплекслӑ механизацилесси патне куҫасси пурнӑҫа кӗрсе пырать. Анчах та нумай стройкӑсенче строительнӑй машинӑсемпе тата механизмсемпе ҫаплах ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ-ха.

1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, строительство ӗҫӗсен хакне йӳнетнӗ. Ҫав вӑхӑтрах нумай организацисем строительствӑпа монтаж ӗҫӗсене йӗркелессине лайӑхлатнипе тата накладной, администраципе хуҫалӑх расхочӗсене чакарнипе строительство ӗҫӗсен хакне йӳнетес тӗлӗшпе государство панӑ планлӑ заданисене пӗтӗмӗшпех тултарса ҫитереймен.

Государство предприятийӗсем, учрежденисем, вырӑнти Советсем, ҫавӑн пекех хуласемпе рабочи поселоксенче пурӑнакансем, государство кивҫен парса пулӑшнипе, 1952 ҫулта пурӑнмалли ҫуртсем 27 миллион тӑваткал метр лаптӑк чухлӗ ытла тунӑ. Кунсӑр пуҫне ялсенче пурӑнмалли ҫуртсем 370 пин тунӑ.

VII. Тавар ҫаврӑнӑшӗ вӑйланса пыни

1952 ҫулта совет суту-илӗвӗ малалла вӑйланса пынӑ. Промышленность тата ялхуҫалӑх производстви енӗпе ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунӑ май, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳснӗ тата продукци хӑйне ларакан хакӗ йӳнелнӗ май, Правительство 1952 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ҫӗнӗрен—карточка системине пӑрахӑҫа кӑларнӑ хыҫҫӑн пиллӗкмӗш хут—кулленхи кирлӗ таварсен вакӑн сутмалли государственнӑй хакӗсене йӳнетнӗ. 1952 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ҫавӑн пекех кӗнекесен хакӗсене, вӑл шутра учебниксен хакӗсене те, йӳнетнӗ. Тавар хакӗсене ҫӗнӗрен йӳнетни совет укҫи-тенкине тата ытларах ҫирӗплетрӗ, вӑл укҫапа тавар ытларах илмелле пулса тӑчӗ, халӑха тавар сутасси ӳсрӗ.

1952 ҫул хушшинче государство тата кооперации суту-илӗвӗ енӗпе халӑха 1951 ҫулхинчен 10 процент ытларах тавар сутнӑ. Уйрӑм таварсем енӗпе тавар сутасси ҫакӑн пек ӳснӗ: аш-какай—10 процент, пулӑ продукчӗсем—13 процент, выльӑх-чӗрлӗх, ӳсентӑран ҫӑвӗсемпе ытти ҫусем—17 процент, ҫӑмарта—9 процент, сӗт тата сӗт продукчӗсем—17 процент, сахӑр—26 процент, кондитер изделисем—19 процент, пурҫӑн пирсем—20 процент, тумтир—11 процент, трикотаж изделийӗсем — 17 процент, чӑлхасемпе носкисем—11 процент, сӑран атӑ-пушмак—15 процент, сӗтел-пукан—20 процент ытла, супӑнь—7 процент, халӑха валли строительство материалӗсем — 20 процент ытла, велосипедсем—24 процент, сехетсем—20 процент, телевизорсем—27 процент, фотоаппаратсем — 30 процент, ҫӗвӗ ҫӗлемелли машинӑсем—22 процент, патефонсем—25 процент. Килте усӑ курмалли холодильниксем, тусан тасатмалли машинӑсем тата кӗпе ҫумалли машинӑсем сутасси чылай ӳснӗ.

1952 ҫулта государствӑпа кооперации суту-илӗвӗнче магазинсемпе лавкасен шучӗ ӳснӗ. Ҫулталӑк хушшинче 7 пине яхӑн ҫӗнӗ магазин уҫнӑ. Хуласенче, рабочи поселоксенче тата ялсенче ятарласа уйрӑм йышши таварсем сутакан магазинсен шучӗ чылай ӳснӗ.

1952 ҫулта колхоз пасарӗсенче продуктсем сутасси малалла ӳснӗ. Уйрӑмах ҫӑнӑх, кӗрпе, ҫӗрулми, пахча ҫимӗҫ, кайӑк-кӗшӗк, ҫӑмарта, пыл сутасси чылай ӳснӗ.

VIII. Рабочисемпе служащисен йышӗ тата ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳсни

СССР халӑх хуҫалӑхӗнче рабочисемпе служащисен йышӗ 1952 ҫул вӗҫӗнче 41,7 миллион ҫын, 1951 ҫул вӗҫӗнчипе танлаштарсан, 900 пин ҫын ытларах пулнӑ. Промышленноҫра, ялхуҫалӑхӗнче, вӑрман хуҫалӑхӗнче, строительствӑра тата транспорт ҫинче рабочисемпе служащисен йышӗ ҫулталӑк хушшинче 725 пин ҫын, шкулсенче, наукӑпа тӗпчев тата сывлӑх учрежденийӗсенче—115 пин ҫын, обществӑллӑ апатлану системинче тата ҫурт-йӗрпе коммунальнӑй хуҫалӑхра—60 пин ҫын ӳснӗ.

1952 ҫулта, иртнӗ ҫулсенчи пекех, ҫӗршывра ӗҫсӗрлӗх пулман.

Иртнӗ ҫулта ремесленнӑй, чугун ҫул, сӑрт-ту промышленность училищисенчен, фабрикӑпа завод шкулӗсенчен, сӑрт-ту промышленность шкулӗсенчен 326 пин ҫамрӑк квалификациллӗ рабочисем пулса вӗренсе тухнӑ, вӗсене промышленноҫра, строительствӑра тата транспорт ҫинче ӗҫлеме янӑ.

Пӗчченшерӗн тата бригаднӑй меслетпе, курссенче вӗрентсе 1952 ҫулта 7.800 пин рабочипе служащи квалификацине хӑпартнӑ.

Промышленноҫра ӗҫлекен рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 7 процент ӳснӗ. Вӑл шутра: машинӑсем тӑвакан промышленноҫра—10 процент, хура металлургире—8 процент, тӗслӗ металлургире—8 процент, ҫӗр кӑмрӑк промышленноҫӗнче—4 процент, нефть промышленноҫӗнче—5 процент, хими промышленноҫӗнче—8 процент ӳснӗ.

Строительствӑра ӗҫлекен рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 7 процент ӳснӗ.

IX. Культура строительстви, сывлӑх ӗҫӗ, хула благоустройстви

1952 ҫулта совет халӑхӗн культурӑллӑ шайӗ малалла ӳссе пынӑ.

Ҫичӗ ҫул вӗрентес тата вӑтам пӗлӳ парас ӗҫ аталаннӑ май, 5—10-мӗш классенче вӗренекенсен шучӗ 1952 ҫулта 1.500 пин ҫын ытла ӳснӗ. 8—10-мӗш классенче вӗренекенсен хисепӗ вара 1 миллион ҫын таран ӳснӗ.

Республикӑсен столицисенче, республикӑсене пӑхӑнса тӑракан хуласенче, область, край центрӗсенче тата пысӑк промышленноҫлӑ центрсенче ҫичӗ ҫул вӗрентес ӗҫрен пурне те вӑтам пӗлӳ памалла тӑвас йӗркене куҫас задачӑпа килӗштерсе, ҫав хуласенче 8—10-мӗш классенче вӗренекенсен шучӗ 1952 ҫулта 44 процент ӳснӗ.

1952 ҫулта аслӑ шкулсенче (заочно вӗренекенсене шутласан) 1.442 пин студент вӗреннӗ, ку вӑл 1951 ҫулхинчен 85 пин ҫын ытларах пулать. Техникумсенче тата ытти специальнӑй вӑтам шкулсенче (заочно вӗренекенсене шутласан) 1.475 пин ҫын вӗреннӗ, ку вӑл, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 106 пин ҫын ытларах пулать.

Аслӑ шкулсенчен тата техникӑллӑ вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнӑ специалистсен, халӑх хуҫалӑхӗнче ӗҫлекен специалистсен, мӗнпур йышӗ 1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 8 процент ытларах пулнӑ.

Ӗҫҫыннисене ӗҫленӗ вӑхӑтрах аслӑ шкулсенче, специальнӑй тата пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулсенче вӗрентес ӗҫ вӑйланнӑ. 1951 ҫулхипе танлаштарсан, заочнӑй тата каҫхи аслӑ шкулсенче вӗренекенсен шучӗ 8 процент, заочнӑй тата каҫхи техникумсенче вӗренекенсен шучӗ—11 процент, ҫамрӑк рабочисен тата ялти ҫамрӑксен шкулӗсенче вӗренекенсен шучӗ 8 процент ӳснӗ.

1952 ҫулта аслӑ шкулсенче тата наука учрежденийӗсенче 27 пин ытла аспиранта наука ӗҫӗсем тума хатӗрленӗ.

Наука, изобретени, литература тата искусство енӗпе уйрӑмах чаплӑ ӗҫсем тунӑшӑн ученӑйсене, инженерсене, агрономсене, литературӑпа искусство работникӗсене, рабочисене тата ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансене 1.776 ҫынна Сталинла премисен лауреачӗ ятне панӑ.

1952 ҫулта ҫӗршывра государство тата обществӑллӑ организацисем аллинче тӑракан тӗрлӗ библиотекӑсем 368 пин пулнӑ. Вӗсенче кӗнекесен шучӗ 880 миллион экземпляр ытла пулнӑ.

1952 ҫулта киноустановкӑсен шучӗ, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 5 процент ӳснӗ.

1952 ҫулта ҫулла 5 миллион та 500 пин ача тата ҫитӗнсе ҫитмен ачасем пионер лагерӗсенче, ача санаторийӗсенче, экскурсисемпе туристсен базисенче пулнӑ е ача садӗсемпе ача ҫуртӗсемпе тата ача яслисемпе пӗрле ҫуллахи вӑхӑтра организованно дачӑллӑ вырӑнсене канма кайнӑ.

1952 ҫулта халӑх сывлӑхне сыхлас тата санитарипе профилактика ӗҫӗсем малалла лайӑхланса пынӑ. Больницӑсен, ача ҫуратмалли ҫуртсен, диспансерсен тата ытти сывлӑх учрежденийӗсен, ҫавӑн пекех санаторисемпе канмалли ҫуртсен шутне ӳстернӗ. Больницӑсемпе ача ҫуратмалли ҫуртсенче койкӑсен шучӗ, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 50 пин ытла ӳснӗ. Врачсен шучӗ, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 14 пин ҫын ӳснӗ.

Медицина промышленноҫӗ 1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, продукци 23 процент ытларах туса кӑларнӑ. Питӗ паха эмелсем, диагностикӑллӑ тата ытти аппаратура, медицина инструменчӗсем туса кӑларасси чылай ӳснӗ.

1952 ҫулта коммунальнӑй предприятисем тӑвас тата хуласемпе рабочи поселокӗсене лайӑхлатас, водопроводсемпе канализаци тӑвас, трамвайсемпе троллейбус ҫулӗсене вӑрӑмлатас, пурӑнмалли ҫуртсене газ кӗртес тата ӑшӑтас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ. Ҫавӑн пекех хула урамӗсемпе площачӗсене чулпа асфальт сарас, хуласемпе рабочи поселоксенче йывӑҫ лартас, бульварсем, скверсем тата парксем тӑвас енӗпе те пысӑк ӗҫсем тунӑ.

X. Наци тупӑшӗ тата халӑх тупӑшӗ ӳсни

СССР Наци тупӑшӗ 1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 11 процент ӳснӗ.

Совет Союзӗнче пӗтӗм наци тупӑшӗ ӗҫҫыннисен аллинче тӑрать, Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем хӑйсен материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме, иртнӗ ҫулхи пекех, наци тупӑшӗнчен тӑватӑ пайран виҫӗ пайне яхӑн илнӗ, наци тупӑшӗн ытти пайӗ социализмлӑ производствӑна аслӑлатма тата государствӑн пӗтӗмӗшлӗ ытти ӗҫӗсене, обществӑллӑ ӗҫсене пурнӑҫлама государство, колхозсемпе кооперативлӑ организацисен аллинче юлнӑ.

Наци тупӑшӗ ӳсни рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин материальнӑй пурнӑҫне чылай лайӑхлатма, социализмлӑ производствӑна малалла аслӑлатма май панӑ.

ССР Союзӗнчи халӑхӑн материальнӑй пурнӑҫӗ лайӑхланса пыни рабочисемпе служащисен реальнӑй ӗҫ укҫийӗ малалла ӳссе пынинче тата хресченсен колхозӑн обществӑллӑ хуҫалӑхӗнчен, ҫавӑн пекех тата кил вырӑнӗпе хӑйсен хуҫалӑхӗнчен илекен тупӑшӗ ӳснинче курӑнса тӑрать.

1952 ҫулта, унччен ҫулсенчи пекех, халӑх государство пособийӗ шучӗпе, рабочисемпе служащисене социальнӑй страховани енӗпе тӳленипе, социальнӑй обеспечени тӑрӑх пенси илнипе, санаторисене, канмалли ҫуртсене, ача-пӑча учрежденийӗсене кайма тӳлевсӗр тата ҫӑмӑллӑхпа путевкӑсем илнипе, нумай ача амӑшӗсемпе пӗччен амӑшӗсем пособи илнипе, тӳлевсӗр медицина пулӑшӑвӗ илнипе, тӳлевсӗр вӗреннипе тата квалификацие хӑпартнипе, вӗренекенсем стипенди илнипе тата ытти ҫӑмӑллӑхсем илнипе тупӑш курнӑ. Малалла, мӗнпур рабочисемпе служащисен, урӑхла каласан, 42 миллион ҫынна яхӑн, государствӑран ӗҫ укҫи илсе икӗ эрнелӗхрен кая мар отпускра пулнӑ, чылай профессисенчи работниксем тата нумай вӑхӑта пыракан отпускра пулнӑ. 1952 ҫулта халӑх государство шучӗпе асӑннӑ тӳлевсемпе ҫӑмӑллӑхсем тӑрӑх 129 миллиард тенкӗлӗх тупӑш илнӗ.

Кулленхи кирлӗ таварсен хакӗ йӳнелнипе, рабочисемпе служащисен ӗҫ укҫи ӳснипе, хресченсен укҫан тата продуктӑн илекен тупӑшӗ ӳснипе, государство шучӗпе ҫӑмӑллӑхсем илнипе — рабочисемпе служащисен тупӑшӗ 1952 ҫулта ӗҫлекен кашни ҫын пуҫне, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 7 процент, хресченсен тупӑшӗ, ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлекен кашни ҫын пуҫне шутласан, 8 процент ӳснӗ.

СССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи
Центральнӑй Статистика Управленийӗ

Финанс работникӗсен канашлӑвӗ

1953 ҫулхи январӗн 19-мӗшӗнче Шупашкарта республикӑри финанс работникӗсен канашлӑвӗ пулчӗ.

Канашлу финанс ӗҫне лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен сӳтсе явнӑ. Ку ыйтупа Чӑваш АССР Финанс министрӗ А. В. Сомов юлташ доклад туса пачӗ.

— Парти съезчӗн историллӗ решенийӗсем тата И. В. Сталин юлташӑн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ классикла произведенийӗ партипе пӗтӗм совет халӑхӗн пирӗн ҫӗршывра коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешмелли чаплӑ та пысӑк программи пулса тӑраҫҫӗ.

Партин XIX-мӗш съезчӗ ССР Союзне 1951—1955 ҫулсенче аталантармалли пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе панӑ директивӑсенче ҫӗршыв халӑх хуҫалӑхне хӑватлӑн вӑйлатса пыма, совет ҫыннисен пурнӑҫне лайӑхлатса тата культурӑллӑ шайне ӳстерсе пыма палӑртнӑ.

Хуҫалӑхпа культура строительствин питех те пысӑк программине пурнӑҫлама укҫа-тенкӗ нумай кирлӗ пулать,— тет докладчик.— Ҫавӑнпа та хуҫалӑхри пурлӑхсемпе, ресурссемпе тата укҫа-тенкӗ пухмалли майсемпе туллин усӑ курни, хуҫалӑх расчетне ҫине тӑрса пурнӑҫласа пыни, пур ӗҫре те типтерлӗ тата перекетлӗ пулни, перекетлӗх режимне ҫирӗп тытса пыни кирлӗ.

Сталинла пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе панӑ директивӑсенче: «...производствӑри халиччен палӑрман резервсене шырамалла, тупмалла, вӗсемпе усӑ курмалла, производство меслечӗсене пӗрмаях лайӑхлатса пымалла, производствӑн хӑйне ларакан хакне йӳнетмелле, хуҫалӑх расчетне пурнӑҫа кӗртсе пымалла»,— тенӗ.

Директивӑсенче финанс органӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен ҫапла каланӑ: «Хуҫалӑх планӗсене тултарнине тата перекетлӗх режимне тытса пынине финанс органӗсен укҫапа тӗрӗслесе тӑрассине вӑйлатмалла».

Ҫак задачӑсем финанс органӗсене пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхри хуҫалӑхпа культура строительствине пурнӑҫлама укҫа-тенкӗ мобилизацилес тӗлӗшпе тимлӗ ӗҫлеме хушаҫҫӗ. Финанс работникӗсем государство интересӗсене, халӑх интересӗсене хӳтӗлеме, укҫа-тенкӗ пухмалли плансене пӗтӗмпех тултарассишӗн тӑрӑшма тивӗҫлӗ.

Республикӑн пӗлтӗрхи бюджечӗ тупӑшсем енӗпе те, расходсем енӗпе те пурнӑҫланса ҫитмен. Чылай предприятисемпе организацисем 1952 ҫулта производствӑпа финанс планӗсене тултарайман. Ҫӑмӑл тата апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗсен предприятийӗсем, автомобиль транспорчӗ тата суту-илӳ организацийӗсем уйрӑмах ҫителӗксӗр ӗҫленӗ, вӗсем бюджета тивӗҫлӗ укҫана 3.370 пин тенкӗ параймарӗҫ. Предприятисемпе организацисен хуҫалӑхпа финанс ӗҫӗсене Чӑваш АССР Финанс министерстви, районсемпе хуласенчи финанс пайӗсем начар тӗрӗслесе тӑнӑ.

Финанс органӗсем япӑх ӗҫленипе пула республика халӑх укҫа-тенкине мобилизацилемелли плана пӗлтӗрхи пӗр кварталта та тултараймарӗ. Колхозсен тупӑшӗнчен илмелли налога пухас ӗҫ те кирлӗ пек пулса пыраймасть. Укҫа-тенкӗ пухас енӗпе Хӗрлӗ Чутай, Пӑрачкав, Первомайски, Шупашкар, Куславкка, Октябрьски, Чкаловски, Ҫӗмӗрле, Вӑрнар тата Элӗк районӗсем уйрӑмах кая юлчӗҫ. СССР халӑх хуҫалӑхне аталантармалли государство заемӗн (1952 ҫулхи кӑларӑмӑн) укҫине 1953 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне 62 процент ҫеҫ пухнӑ. Тупӑшран илекен налога пухас тӗлӗшпе те финанс органӗсем начар ӗҫленӗ. Государствӑна тивӗҫлӗ тупӑшсене пухас енӗпе Первомайски, Шӑмӑршӑ, Красноармейски, Советски тата Сӗнтӗрвӑрри районӗсенче уйрӑмах ӗҫ япӑх тӑрать.

Бюджета расходсем енӗпе пурнӑҫлас ӗҫре те ҫитменлӗхсем сахал мар. Халӑха вӗрентес ӗҫ, сывлӑха сыхлас ӗҫ валли, культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсене тытса тӑма палӑртнӑ укҫа-тенке чылай районсемпе ял Совечӗсенче вӑхӑтра уйӑрса памаҫҫӗ. Нумай ял Совечӗсем учительсене, медицина работникӗсене, ялхуҫалӑх специалисчӗсене ӗҫ укҫи вӑхӑтра тӳлемеҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл районти финанс пайӗсен работникӗсем, налог агенчӗсем тата ял Совечӗсем укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленинчен килет. Ялсенче хресченсенчен СССР халӑх хуҫалӑхне аталантармалли государство заемӗн (1952 ҫулхи кӑларӑмӑн) укҫине пухас ӗҫ уйрӑмах начар пулса пырать.

Шупашкар райсовет исполкомӗн финанс пайӗн заведующийӗ **Федоров** юлташ Чӑваш АССР Финанс министерствине районсенчи финанс пайӗсене оперативлӑ тата конкретлӑ ертсе пыманшӑн критиклерӗ. Шупашкар районӗн центрӗ—Кӳкеҫ ялӗ хула ҫывӑхӗнчех пулин те, районти финанс пайӗнче ЧАССР Финанс министрӗ Сомов юлташ та, унӑн заместителӗсем Г. Иртышовпа В. Таврин юлташсем те юлашки вӑхӑтра пӗр хутчен те пулман, финанс пайӗн работникӗсене кулленхи ӗҫре практикӑллӑ пулӑшу паман.

Ишлей райсовет исполкомӗн финанс пайӗн заведующийӗ **Иванов** юлташ район укҫа-тенкӗ пухас ӗҫре кая юлни ҫинчен, малта пыракан финанс работникӗсен ӗҫри паха опытне пур ҫӗре те сарас ӗҫе кирлӗ пек организацилеменни ҫинчен каларӗ. Вӑл республикӑри перекет кассисемпе государство кредичӗн управленийӗ вырӑнти перекет кассисене начар ертсе пынине палӑртрӗ.

Пӑрачкав районӗн финанс пайӗн заведующийӗ **Макаренко** юлташ ЧАССР Финанс министерстви тӗрлӗ налогсемпе тӳлевсене пухмалли ӗҫсене планланӑ чухне йӑнӑшсем туни ҫинчен каларӗ. Государство тупӑшӗсене пухас ӗҫе планланӑ чухне района мӗн чухлӗ тавар кӳрсе пырассине тӗплӗн шута илмеҫҫӗ.

Прениre тата **Иванов** (Ҫӗрпӳ), **Афанасьев** (Советски), **Плотников** (Тӑвай), **Золотников** (ЧАССР Гострах управленийӗ), **Дубровский** (перекет кассисемпе государство кредичӗн управленийӗ), **Вахрамеев** (Вӑрнар), **Таврин** (Финанс министрӗн заместителӗ), **Бухаров** (Куславкка) юлташсем тухса каларӗҫ.

Юлашкинчен Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн председателӗ **И. Афанасьев** юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл финанс органӗсен руководителӗсене укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе вӑйлатма, финанс планне кварталтан квартала тултарса пырассишӗн тимлӗ ӗҫлеме чӗнчӗ.

„Стахановец“ стена хаҫачӗ 25 ҫул тултарчӗ

ОКТЯБРЬСКИ. «Культура» колхоз членӗсен политикӑллӑ тата культурӑллӑ пурнӑҫӗнче паллӑ событи пулса иртрӗ. Кӑҫалхи январӗн 20-мӗшӗнче вӗсем хӑйсен колхозӗнчи «Стахановец» стена хаҫат тухма пуҫланӑранпа 25 ҫул тултарнине ялпа пухӑнса палӑртрӗҫ.

1928 ҫулхи январӗн 21-мӗшӗнче, Коммунистсен партийӗпе Совет государствине тӑвакан генилле В. И. Ленин вилнӗренпе 4 ҫул тултарнӑ кун, хальхи Октябрьски районӗнчи Вӑрманкас ялӗнчи комсомолецсемпе активлӑ хресченсем стена хаҫачӗ кӑларнӑ. Хӑйсен хаҫатне вӗсем «Ял куҫӗ» тесе ят панӑ.

Пирвай пуҫласа тухакан стена хаҫачӗ ялти чухӑнсемпе вӑтамсене ҫамрӑк Совет влаҫне тӗреклетессишӗн кӗрешме, аслӑ Ленин рабочисемпе ӗҫхресченсем хушшинчи тӑванла союза вӑйлатма вӗрентсе каланине чӗрере тытма чӗннӗ, кулаксен сӑтӑрла ӗҫне хӑюллӑ тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Ҫавӑнпа та ӗҫхресченсем ку хаҫата пысӑк хисепе хунӑ, унӑн кашни номерне кӑмӑлтан кӗтсе илнӗ.

Совет ҫӗршывне индустриализацилемелли сталинла аслӑ плана хӑвӑртрах пурнӑҫлассишӗн, ялта кулаксене тӗпӗ-тымарӗпе кӑкласа колхозсем тӑвассишӗн татӑклӑ кӗрешӳ сарӑлнӑ кунсенче Вӑрманкасри комсомолецсем хӑйсен хаҫатне «Ударник» тесе ят панӑ. Ҫав кунранпа ку хаҫат хресченсене тӑван ялта колхоз стройӗ татӑклӑнах ҫӗнтермелле тӑвассишӗн мӗнпур вӑйпа кӗрешме чӗнекен хаҫат пулса тӑнӑ.

Ҫӗршыври промышленноҫпа транспортра тата ялхуҫалӑхӗнче ку чухнехи чи хӑватлӑ юхӑм—стахановла юхӑм ҫӗнтерӳллӗн сарӑлса пынӑ кунсенче Вӑрманкасри колхозниксем хӑйсен хаҫатне «Стахановец», тесе ят панӑ.

Паянхи «Стахановец» стена хаҫатне Октябрьски районӗнче ҫеҫ мар, хамӑр республика тулашӗнче те лайӑх пӗлеҫҫӗ. Унӑн нумай ҫулхи опычӗсем ҫинчен Совет Союзӗн столицинче тухса тӑракан хаҫат-журналсенче те ҫырса кӑларнӑ.

Вӑрманкасри «Культура» колхоз членӗсем хӑйсен хаҫачӗ 25 ҫул тултарнӑ куна анлӑн палӑртрӗҫ. Юбилей ирттерме вӗсем патне районти колхозсемпе учрежденисенчи тата шкулсенчи стена хаҫат редакторӗсем, партипе совет, обществӑллӑ организаци представителӗсем йышлӑн пухӑнчӗҫ.

Колхоз клубӗн пысӑк залӗнче «Стахановец» хаҫатӑн юлашки ҫулсенче кӑларнӑ номерӗсен выставки уҫӑлнӑ. Кунтах районти ытти колхозсенчи редколлегисем те хӑйсен хаҫачӗсене илсе пынӑ. Хӑнасем «Стахановец» хаҫат хӑйӗн содержанийӗпе тата культурипе ыттисемшӗн кӑтартуллӑ пулнине палӑртаҫҫӗ, унӑн лайӑх опычӗпе паллашаҫҫӗ.

Юратаҫҫӗ те хисеплеҫҫӗ «Культура» колхоз членӗсем хӑйсен хаҫатне. Вӑл 25 ҫул тултарнӑ юбилей ячӗпе ирттернӗ пухӑва 300 ҫын ытла пухӑнчӗҫ. Вӗсенчен 60 ҫын ытла ҫак хаҫатӑн ӗҫне активлӑн хутшӑнакан корреспондентсем.

КПСС XIX съезчӗ йышӑннӑ решенисене май вырӑнти пичет умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен районти «Хӗрлӗ Октябрь» хаҫат редакторӗ В. Андреев юлташ доклад туса пачӗ.

Юбилей кунӗ тӗлне «Стахановец» хаҫатӑн 1051-мӗш номерӗ тухрӗ.

1952 ҫулта редколлеги колхозлӑ ял ӗҫченӗсем панӑ 432 ҫырӑва пичетлесе кӑларнӑ. Коммунистсемпе комсомолецсем тата партире тӑман колхозниксем хӑйсен ҫырӑвӗсенче ялхуҫалӑх артелӗн Уставне пӑсакансене, обществӑллӑ пурлӑха хапсӑнакансене, кахалсене пӗр хӗрхенӳсӗр критиклеҫҫӗ. Ҫавӑн пек ҫырусенчен 62-шне колхоз правленийӗн ларӑвӗсенче сӳтсе явнӑ, айӑплисене Устав тӑрӑх ответ тыттарнӑ, ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме мерӑсем йышӑннӑ.

«Стахановец» хаҫат редколлегийӗн, чи малтанах И. Андреев редакторӑн паха ӑсталӑхӗ вӑл—хаҫатри материалсене кӗскен те витӗмлӗн ҫырма пӗлни. Пысӑк мар хут листи ҫинче кӑларакан хаҫатра, яланхи пекех, 15—20 заметка таранччен вырнаҫтараҫҫӗ.

Ку хаҫат критикӑллӑ статьясене пичетленӗ чухне нумай енлӗ формӑсемпе, уйрӑмах фельетонпа, сӑвӑпа, карикатурӑсемпе усӑ курнӑ опытпа вырӑнти пичет работникӗсем тӗплӗнрех паллашма тӑрӑшаҫҫӗ.

Юбилей кунӗ ячӗпе «Стахановец» хаҫат редколлегине республикӑпа районти организацисенчен йышлӑ телеграммӑсем ҫитрӗҫ.

Юбилей каҫне пухӑннӑ ҫынсем валли колхозри художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗ лайӑх концерт пачӗ.

Н. ВОЛКОВ.

ВЫРĂНТИ СОВЕТСЕНЕ ДЕПУТАТА СУЙЛАМА КАНДИДАТСЕМ ТĂРАТНИ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем

ОКТЯБРЬСКИ. Колхозри радиоузел урлă колхозниксене район Советне депутата суйлама кандидатсен тăратма пĕрлехи пуху пуласси çинчен пĕлтерчĕç. «Звезда» колхоз клубне колхозниксем нумай пухăнчĕç.

Пухура колхозри ăратлă лашасен фермин заведующийĕ В. Кондратьев юлташ район Советне Урхас Кушкă суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама «Звезда» колхоз председательне Степан Яковлевич Яковлев юлташа кандидата тăратма сĕнчĕ. Кондратьев юлташ каланине колхозниксем ырласа йышăнчĕç.

Яковлев юлташ 15 çул ытла ĕнтĕ «Звезда» колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Вăл—колхоза ертсе пырас ĕçре пысăк опыт пухнă çын. 1951 çулта ăна пилĕк пĕчĕк колхоза пĕрлештерсе тунă «Звезда» колхозăн председательне суйланă. 1951—1952 çулсенче «Звезда» колхоз вăйлă тырпул туса илнĕ. Колхоз иртнĕ çулхи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ĕне, сысна, сурăх, лаша ĕрчетес енĕпе иртерсе тултарнă.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх витисене кирпĕчрен тума тытăннă. Колхоз пур ĕçсем енĕпе те районта малта пырать. «Звезда» колхоз ялхуçалăх ĕçĕнче малта пынăшăн район Совечĕпе КПСС райкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Колхозниксем С. Яковлева район Советне депутата суйлама кандидата тăратса, ăна пысăк ĕç шанаççĕ, суйлав кунĕнче уншăн пĕр шухăшлă пулса сасăлама пулаççĕ.

Пухура район Советне Чăрăшкасси суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама районти ялхуçалăх пайĕнчи çамрăк специалиста Татьяна Кондратьевна Кондратьева зоотехника кандидата тăратрĕç.

А. ПОЛИКАРПОВ.

Тăрăшса ĕçлекен учитель

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Шупуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул еннелле «Урожай» колхозри колхозниксем васкаса утаççĕ. Хĕрсемпе каччăсем капăр тумланнă. Таса та çутă, картинсемпе, лозунгсемпе, портретсемпе капăрлатнă зала пĕрерĕн-икшерĕн кĕрсе вырнаçса лараççĕ. Ку—çичĕ çул вĕренмелли шкулăн пĕр класĕ. Халăх пухăнса çитнĕ. Часах колхоз председателĕ К. Репин юлташ пуху уçăлни çинчен пĕлтерет. Пуху кун йĕркинче пĕр ыйту: ĕçсынни депутачĕсен район Советне депутата суйлама кандидат тăратасси.

Утмăл пилĕк çулхи суйлавçă Б. Митрофанов юлташ сăмах илчĕ. Вăл ялти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне Павел Кузьмич Кузьмин юлташа район Советне Шупуç суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидата тăратма сĕнчĕ.

— Эпĕ Павел Кузьмича мĕн пĕчĕкренпех пĕлетĕп. Эпир унпа пĕр вăхăтра ӳссе çитĕннĕ,—тет трактор бригадин бригадирĕ П. Герасимов юлташ.—Павел Кузьмич, шкула ертсе пынисĕр пуçне, колхоза та чылай пулăшрĕ. Вăл колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ пулса ырми-канми ĕçлерĕ.

Пухура пилĕк çын тухса каларĕç. Вĕсем пурте Кузьмин юлташ кандидатурине ырларĕç.

Пуху, пĕр кăмăллă пулса, район Советне депутата суйлама Павел Кузьмич Кузьмин юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

Л. ТАРАСОВ.

Халăх шанчăкне тивĕçлисем

СОВЕТСКИ. (Хамăр корр.). Машина-трактор станцинче ĕçлекенсен коллективĕ район Советне Советски суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама малта пыракан 7-мĕш трактор бригадин бригадирне Георгий Михайлович Михайлов юлташа кандидата тăратрĕ. Иртнĕ çулта унăн бригади тракторпа тумалли ĕçсен çултахăкри планне 115 процент тата пур тĕрлĕ ĕçсемпе те тултарнă. Михайлов юлташ — КПСС членĕ. Иртнĕ конференцире ăна парти райкомĕн членне суйланă. Вăл—пуçарулă механизатор тата агитатор, малта пыракансен опытне хăюллăн сарса пырать.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕнче уй-хир бригадин бригадирĕ Л. Александров юлташ район Советне Асламас суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама ял Совечĕн финанс агентне Анастасия Андреевна Дорожнова юлташа кандидата тăратма сĕнчĕ. Вăл укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет, плана тăтăшах тултарса пырать. Иртнĕ çулхи тăваттăмĕш квартал планне 104 процент тултарнă. Пуху, пĕр кăмăллă пулса, Дорожнова юлташа район Советне депутата суйлама кандидата тăратма йышăнчĕ.

Суйлав умĕнхи пухăва Андреев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем йышлăн пухăнчĕç. Вĕсем район Советне депутат суйлама кандидат тăратасси çинчен сӳтсе явма тытăнсан, тӳрех хăйсен колхозĕн председателĕн — Прокопий Федорович Федоров юлташăн ятне асăнчĕç. Пĕрлешсе пысăкланнă колхоза Федоров юлташ районта малти рете кăларнă. Иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене колхоз районта пуринчен малтан вĕçленĕ. Государство умĕнчи пур обязательствăсене те чыслăн пурнăçланă. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем 1953 çулшăн та нумай панă. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă.

Суворов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем район Советне депутата суйлама колхоз бригадирне, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне Антонина Ивановна Иванова юлташа кандидата тăратрĕç.

Район Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче — Выла пасарĕнчи зооветучасток заведующийĕ Галина Петровна Есина, КПСС райкомĕн секретарĕ Николай Матвеевич Русанов, Советскинчи вăтам шкул учительници Александра Евдокимовна Григорьева, комсомол райкомĕн секретарĕ Александр Петрович Петров юлташсем тата ыттисем те пур.

Район Советне депутата суйлама колхозсенчи стахановецсене, партипе совет органĕсенчи тата культура фронтĕнчи работниксене, халăхăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене — пурĕ 25 çынна кандидата тăратнă.

• • •

МУРКАШ. Районти ĕçсыннисем вырăнти Советсене депутата суйлама хуçалăхпа культура строительствинче активлă ĕçлекенсене кандидата тăратаççĕ.

Район Советне Шаптак суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама Сталин ячĕпе тăракан колхоз членне, районти паллă свинаркăна Елена Гавриловна Гаврилова юлташа кандидата тăратнă. Вăл 15 çул хушши фермăра ĕçлет. Иртнĕ çулта хăй пăхакан кашни сысна аминчен 18-шар çура илнĕ. Кăçал кашни сысна аминчен 22-шер çура илме пулнă. Гаврилова юлташ сысна ĕрчетес ĕçе малта пыракан зоотехника науки кăтартнă пек туса пырать.

Мăн Турхан ялĕнчи хресченсен пухăвĕнче район Советне депутата суйлама пархатарлă ĕçпе чапа тухнă тракториста Иван Егорович Егоров юлташа кандидата тăратнă.

РСФСР тата Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учительници Клавдия Ивановна Тетерина юлташ район Совечĕн виççĕмĕш созыври депутачĕ пулнă, халăх шанăçне тӳрре кăларнă. Тетерина юлташ 50 çула яхăн халăха вĕрентес ĕçре ĕçлет. Вăл вĕрентсе кăларнă нумай çамрăксем халĕ инженерсемпе техниксем, учительсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем, Совет Çарĕн офицерĕсем пулса ĕçлеççĕ. Ярапайкасси ялĕнчи ĕçсыннисем район Советне депутат суйлама кандидат тăратма пухăнсан, чи малтанах, Клавдия Ивановна ятне асăнчĕç. Пурте пĕр кăмăллă пулса, ăна кандидата тăратма йышăнчĕç.

П. СЕМЕНОВ.

Парторганизацисем уйăрнă пиншер агитаторсем суйлавçăсем хушшинче ĕçлеççĕ. Вĕсем КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене, суйлав законне ăнлантарса параççĕ, ĕçсыннисене производство планне ирттерсе тултарма хавхалантараççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри парторганизаци уйăрнă агитатор Р. А. Соловьева юлташ Шупашкар хулинчи Ленинградски урамĕри 44-мĕш çуртра пурăнакан çамрăксемпе калаçу ирттерет.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парар!

ХИСЕП ХĂМИ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсем тăратнă тăрăх кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

3. **«Красный Флот» колхоз** (председателĕ **П. Григорьев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **И. Гаврилов** юлташ, йывăç касакансен бригадин бригадирĕ **А. Парамонов** юлташ, лавçăсен бригадин бригадирĕ **М. Парамонов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 102,5 процент, турттарса кăлармалли плана 105,5 процент тултарнă.
4. **Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. Данилов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **А. Петров** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли плана срокчен тултарнă.
5. **Мичурин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. Абрамов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **А. Орлова** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 104,5 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 102,5 процент тултарнă.
6. **Кадыков ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Н. Ермолаев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **А. Егорова** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли тата каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана срокчен тултарнă.
7. **«Победа» колхоз** (председателĕ **А. Федоров** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **С. Силин** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **А. Федоров юлташ**). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 105,2 процент, çул хĕррине илсе тухмалли плана 105 процент тултарнă.
8. **Ильич ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. Агеносов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **В. Андреев юлташ**). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,8 процент, турттарса кăлармалли плана 102,0 процент тултарнă.

Татаклă улшăну тумалла

ЕТĔРНЕ. Районти малта пыракан Буденный ячĕпе, Маленков ячĕпе тăракан колхозсем государство заданине пурнăçлама хăйсен мĕнпур вăйĕсене мобилизацилерĕç. Йывăç турттаракансен бригадисене колхоз председателĕсем Ф. Юхтановпа М. Князьков юлташсем ертсе пычĕç. Колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Çавна пула колхозсем йывăç турттарса кăлармалли плана срокчен тултарчĕç.

Мичурин ячĕпе тăракан, «Большевик», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем те паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Колхоз правленийĕсем йывăç турттарма пултаруллă колхозниксене уйăрса янă, вĕсене лайăх лашасем çирĕплетсе панă. Мичурин ячĕпе тăракан колхозăн 1.000 фестметр йывăç турттармалла. Январĕн 15-мĕшĕ тĕлне 600 фестметр ытла турттарнă. Лавçăсен бригадине пултаруллă комсомолец, колхоз правленийĕн членĕ А. Захаров юлташ ертсе пырать. Вăл лавçăсен ĕçне тĕрĕс организацилерĕ, çирĕп йĕрке тунă. Вĕсем йывăç турттармалли плана вырăнти Советсен суйлав кунĕ тĕлне тултарма, планран ирттерсе 100 фестметр йывăç турттарма обязательство илнĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, район йывăç турттарас тĕлĕшпе çаплах юлса пыратьха. Уйрăм колхоз руководителĕсем вăрманта ячĕшĕн кăна ĕçлес çул çине тăнă: Етĕрне вăрман пунктĕнче йывăç турттарма районти çичĕ колхоза çирĕплетнĕ. Вĕсен 9.100 фестметр турттармалла. Январĕн 15-мĕшĕ тĕлне вĕсем 2.265 фестметр çеç турттарнă. Жданов ячĕпе тăракан колхозăн 1.900 фестметр йывăç турттармалла, 253 фестметр çеç турттарнă. График тăрăх куллен 19 лав ĕçлемелле пулсан, 7—8 лав кăна ĕçлет. Вĕсем те тухăçлă ĕçлемеççĕ, куллен пĕтĕмĕшпе те 3—4 фестметр кăна турттарса кăлараççĕ. Лавçăсене ертсе пыма колхоз правленийĕ ответлă çын уйăрман. Çакна пула хăшпĕр лавçăсем йывăç турттарас вырăнне, хăйсен ĕçĕсене туса сӳреççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан, «Красноармеец», «1-ое Мая» колхозсем те юлса пыраççĕ. Вĕсем плана 15—20 процент кăна тултарнă. «1-ое Мая» колхоз председателĕ Гущин юлташ хăйĕн ответсăрлăхне тĕрлĕрен сăлтавсемпе витме тăрăшать. Малтан йывăç турттарма çунасем çук тесе кутăнланса пурăннă. Халĕ унăн нимĕнле сăлтав та çук. Çак колхоз ик-виç çул каялла вăрман хатĕрлевĕнче малта пынă. Колхозра пултаруллă колхозниксем сахал мар. Ĕç пĕтĕмпех Гущин юлташран, вăл хăйĕн Тăван çĕршыв умĕнчи ответлăхне туйманнинчен килет. Колхозăн 1.000 фестметр йывăç турттармалла. Чăннипе 113 фестметр кăна турттарнă. График тăрăх 10 лавпа ĕçлемелле, 4—5 лавçă эрнере виç-тăват хут вăрмана кайса килеççĕ те ытти кунсенче хăйсем валли вутă турттараççĕ.

КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕ вăрман хатĕрлев планне тултарас ыйтăва хăйсен ларăвĕсенче те, тĕрлĕрен канашлусенче те час-часах сӳтсе яваççĕ, лайăх решенисем йышăнаççĕ. Анчах вĕсем йышăннă решенисене вĕçне çитиех пурнăçлассишĕн кĕрешмеççĕ. Район руководителĕсем вăрман турттармалли плана тултарса пыман колхоз председателĕсен ответлăхне ӳстерме тăрăшмаççĕ.

Колхозниксем валли тухăçлă ĕçлеме кирлĕ условисем туса паман. Вăрман пунктĕнчи столовăй йĕркеллĕ ĕçлемест. Магазин час-часах хупă тăрать. Ялпо председателĕ Романов юлташ вăрманта ĕçлекенсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшмасть. Лавçăсем хушшинче массăллă-ăнлантарулă ĕçе туса пымаççĕ. Колхозниксем чылайăшĕ Пушнар ялĕнче пурăнаççĕ. Вĕсем патĕнче агитаторсем пулмаççĕ. Вăрман пунктĕнче икĕ уйăх хушшинче кино пачах кăтартман.

Н. ЦВЕТКОВ.

☆

КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1953 ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

С В О Д К А

(процентпа)

Районсем	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	35,1	41,9	34,2
Элĕк	37,0	14,9	21,8
Вăрнар	36,8	27,5	24,2
Йĕпреç	31,2	16,5	17,2
Ишлей	—	—	20,8
Калинино	37,1	33,5	32,4
Канаш	45,9	15,3	20,5
Комсомольски	80,0	30,5	55,8
Куславкка	108,5	50,2	71,9
Красноармейски	29,5	2,1	15,8
Хĕрлĕ Чутай	39,1	16,5	—
Кувакино	29,7	19,1	25,2
Сĕнтĕрвăрри	67,0	50,4	—
Муркаш	68,2	54,9	—
Октябрьски	61,7	44,9	15,9
Первомайски	64,1	23,3	28,7
Пăрачкав	52,0	52,6	13,4
Советски	36,2	37,2	14,7
Сĕнтĕр	—	15,5	—
Вăрмар	55,2	3,3	37,5
Çĕрпӳ	23,8	10,6	20,5
Шупашкар	136,6	120,9	118,8
Чкаловски	80,3	40,9	27,4
Чурачăк	52,9	21,9	62,8
Шăмăршă	44,1	14,1	34,5
Нăхасан	50,6	11,4	25,7
Çĕмĕрле	59,4	64,9	101,5
Етĕрне	—	17,5	35,4
Елчĕк	17,1	61,9	20,2
Тăвай	34,1	3,2	18,1

Панă сăмаха чыслăн пурнăçлар

Ишлей районĕ вăрман хатĕрлевĕ енĕпе юлса пырать. Каснă йывăçа турттарса кăлармалли плана 20 процент çеç тултарнă. Çакă вăл уйрăм ял Совечĕсемпе колхоз правленийĕсем тата райсовет исполкомĕ государство заданине пурнăçлассине кирлĕ пек хакламаннине пĕлтерет.

Жданов ячĕпе тăракан колхозăн 600 кубометр йывăç турттарса кăлармалла. Вăл 45 кубометр çеç турттарса кăларнă. Халĕ ку колхозран Буински вăрманпромхозра пĕр лав та ĕçлемест. Колхоз председателĕ Маркелов юлташ обязательство йышăнма, сăмах пама, шантарма юратать.

— Пикенсе тытăнатпăр, задание хăвăрт пурнăçлатпăр,—тет вăл, колхоз вăрман хатĕрлевĕ тĕлĕшпе юлса пыни çинчен сăмах тапратсан. Тăван çĕршыва сăмах пани çеç мар, йывăç материалсем кирлĕ. Çакна Маркелов юлташăн пĕр самантлăха та манма юрамасть.

«Герой» тата «Победа» колхозсем йывăç турттарма тытăнман та. Райсовет исполкомĕ уйрăм ял Совечĕсемпе колхозсен председателĕсем государство дисциплинине пăснине пĕлет, анчах вĕсен ответлăхне ӳстерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть. Районта малта пыракан колхозсем пур. Сăмахран, «Сталинская гвардия», «Правда», «Знамя труда» колхозсем вăрман хатĕрлевне лайăх йĕркеленĕ. Райсовет исполкомĕн вĕсен паха опытне сармалла.

Комсомольски районĕнчи колхозниксем чĕнсе калани çине ответлесе, районти нумай колхозсем вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарма обязательство йышăнчĕç. Панă сăмаха пурнăçласси — колхозниксен хисеплĕ тивĕçĕ.

Ф. ОЛАНГИН.

Çулпуç сăмахĕ çинчен ирттернĕ заняти

Шупашкарти поликлиникăра ĕçлекенсем — кружокра вĕренекенсем каçхине занятие пухăнчĕç. Паянхи заняти партин XIX-мĕш съездĕнче халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ тухса каланă историллĕ сăмах çинчен пулмалла.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ĕçленĕ историллĕ кунсене занятие пухăннисем лайăх астăваççĕ. Октябрĕн 14-мĕшĕнче пулса иртнĕ юлашки ларура аслă çулпуç тухса каланă сăмах совет халăхне çав тери хавхалантарса, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума мобилизацилерĕ.

«Аслă çулпуç хăй вырăнĕнчен тăрса, çирĕп утăмпа трибуна патнелле пырать. Вăл трибуна патне пынă чухне хăватлă оваци пуçланса каять. Залра пурте ура çине тăраççĕ, хăватлăн «ура» кăшкăрнипе Кремль Дворецĕн стенисем чĕтресе тăраççĕ. Питĕ нумай халăхсен чĕрине саламласа калани илтĕнет. Çак оваци совет çынни тулли кăмăлне, коммунистăн чи хаклă шухăш-кăмăлне, парти хăйĕн çулпуçне вĕçĕмсĕр юратнине тата шанса тăнине кăтартса парать. Пĕр минут, икĕ минут, виçĕ минут иртет... Оваци вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Кашниех Сталин сăмахĕсене хăвăртрах илтме ĕмĕтленсе тăнипе çеç оваци юлашкинчен чарăнать...»

Çапла çырчĕç хаçатсем халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа съезд делегачĕсемпе унта пынă хăнасем мĕнле кĕтсе илни çинчен. Çак кунсенче совет çыннисем хăйсен çулпуçĕпе учительне, коммунизм зодчине Сталин юлташа нумай-нумай çулсем хушши пурăнма çирĕп сывлăх сунчĕç, вăл ертсе пынипе коммунизмлă общество тăвассишăн ырми-канми хастарлă ĕçлеме хатĕр пулнине кăтартса пачĕç.

Съезд ĕçленĕ историллĕ кунсем çинчен кĕскен каланипе пуçларĕ пропагандист А. Маркова юлташ занятине. Вăл çак занятине пĕтĕм ответлăха туйса тĕплĕн хатĕрленнĕ, малтанах план тунă. Çав плана çак ыйтусене кĕртнĕ: КПСС—пĕтĕм тĕнчери революциллĕ юхăмпа рабочи юхăмăн революциллĕ хăватлă вăйĕ, тăванла коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисен задачисем, пирĕн партипе мире юратакан мĕнпур халăхсен интересĕсем пĕрлĕхлĕ пулни, капитализмла çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсемпе демократиллĕ партисен ĕç условийĕсем, вĕсен задачисемпе малашлăхĕ.

— Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ,— терĕ пропагандист,— пирĕн партипе Совет государствин историйĕнче çĕнĕ тапхăр пуçарса ячĕ. Сталин юлташăн съезд умĕн пичетленсе тухнă «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕ, Сталин юлташ съездăн юлашки ларăвĕнче тухса каланă историллĕ сăмах тата съезд йышăннă решенисем совет халăхĕпе пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн малалла каймалли çулне прожектор пек çутатса пачĕç, пĕтĕм тĕнчери тата çĕршыв ăшĕнчи лару-тăрăва ăнланса илме май пачĕç. Совет халăхĕ умне коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тумалли малашлăх уçса панă.

Партин Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Г. М. Маленков юлташ XVIII-мĕшпе XIX-мĕш съездсем хушшинче парти утса тухнă çула тĕплĕн те уçăмлăн кăтартса пачĕ, совет халăхĕ социализмлă Тăван çĕршыв чысĕшĕн, хăйĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешнине, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн хастарлăн кĕрешнине тĕплĕн çутатса пачĕ. Совет халăхĕ паттăр кĕрешнине пула тĕнчери иккĕмĕш вăрçă империалистсем кĕтмен результатсемпе пĕтрĕ. Вĕсем Совет Союзне пĕтерсе вăйсăрлатас тенĕ пулсан, вăл вăйланса кайрĕ; Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери авторитечĕ ӳсрĕ. Капитализмлă системăна вăйлăн пырса çапнă, Вăтаçĕр тата Кăнтăр Хĕвелтухăç Европăри чылай çĕршывсем капитализмран уйрăлса кайрĕç, вĕсенче халăх демократи стройĕ çирĕпленчĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн пĕтĕм тĕнчери влиянийĕпе авторитечĕ пысăк пулнине XIX-мĕш съезд лайăх кăтартса пачĕ. Съездра коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисен представителĕсем чылай пулнă. Рабочи класăн малта пыракан борецĕсем пирĕн парти опытĕнчен халăх интересĕсемшĕн кĕрешме вĕренеççĕ. Вĕсем пирĕн партин пуян опытне тимлĕн вĕренеççĕ. Тăванла партисем XIX-мĕш съезда янă саламсем Совет Союзĕпе урăх çĕршывсенчи ĕçсыннисем хушшинчи туслă çыхăнусем ӳссе, тĕреклене пынине кăтартса параççĕ.

Сталин юлташ съездăн юлашки ларăвĕнче каланă историллĕ сăмахра съезда хăйсен представителĕсене ярса сума сунă е саламлă çырусем янă мĕнпур тăванла партисемпе ушкăнсене туслă саламланăшăн, çитĕнӳсем тума ырă суннăшăн съезд ячĕпе тав турĕ...

Маркова пропагандист хăйĕн калаçăвне идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра тата чурне те ăнланмалла ирттерчĕ. Пирĕн парти «Ударнăй бригада» пулни мĕнрен курăннине тĕплĕн ăнлантарса пачĕ, Китайпа Корейăран пуçласа Чехословакипе Венгри таран пулса тăнă çĕнĕ «Ударнăй бригадăсем» çинчен, халĕ пирĕн партие кĕрешме мĕншĕн çăмăлрах пулни çинчен тата ĕç те хаваслăрах пулса пыни çинчен, пирĕн парти интересĕсем мире юратакан халăхсен интересĕсемпе тачă пĕтĕçсе тăни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Иккĕмĕш занятире çак тема тăрăх кружокра юлташла калаçу пулса иртрĕ. Пропагандист иртнĕ занятире сӳтсе явнă тĕп ыйтусемпе паллаштарнă хыççăн, юлташла калаçу пуçланчĕ. Чи малтан çамрăк врач Берсневая юлташ сăмах илчĕ. Вăл партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем çинчен каласа пачĕ.

— Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ пĕтĕм тĕнчере историллĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл йышăннă решенисенче коммунизм тумалли конкретлă программăна палăртса хунă. Вăл Коммунистсен партийĕн пĕрлĕхне татах та çирĕплетрĕ, пĕтĕм тĕнчери рабочи класс пĕр шухăшлă пулнине кăтартса пачĕ. Съезд тăванла коммунистсен партийĕсене идея тĕлĕшпе хĕçпăшаллантарчĕ.

Унтан Бутявинăпа Смирнов юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем, Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе, Октябрьти Социализмлă Аслă революци туса ирттерни çинчен тата капиталистсемпе помещиксене сирпĕтсе антарни çинчен каларĕç. Çакă вăл пĕтĕм этемлĕх историйĕнчи паллă улшăну пулчĕ.

1917 çулта влаçа кĕрешсе илнĕ хыççăн Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе, Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем социализмлă общество туса çитерчĕç, халĕ коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн хастарлă кĕрешеççĕ. Сталин юлташ çапла каларĕ: «тăванла партисен представителĕсем, пирĕн партин паттăрлăхĕпе çитĕнĕвĕсене курнипе хавасланса, ăна тĕнчери революциллĕ юхăмпа рабочи юхăмĕн «Ударнăй бригади» тесе ят пачĕç».

Коммунистсен аслă партийĕн çитĕнĕвĕсем капитализм пусмăрĕнче пурăнакан халăхсен пурнăçне çăмăллатасса мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем шанса тăнă. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ çак шанăçа тӳрре кăларчĕ. Совет Союзĕ халăхĕн тĕслĕхĕпе ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене çутă малашлăхшăн кĕрешме хавхалантарса пырать. Иккĕмĕш тĕнче вăрçинче Совет Союзĕ, нимĕçсемпе японецсен фашистла тискер тытăмне аркатса тăкса, Европăри тата Азири халăхсене фашистла чуралăха кĕрсе ӳкес хăрушлăхран çăлса хăварчĕ.

Пирĕн аслă çĕнтерӳ урăх çĕршывсенчи рабочи класăн кĕрешĕвне çăмăллатрĕ тата çĕнĕ «Ударнăй бригадăсем» тума май пачĕ. Халăх демократи çĕршывĕсем, Совет Союзĕ пысăк пулăшу панипе, çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре чылай çитĕнӳсем турĕç.

Паллах, «Ударнăй бригада» пĕччен пулнă чухне, çав малта пырас ĕçе пĕччен тенĕ пек туса пыма тивнĕ чухне, çав хисеплĕ ĕçе пурнăçлама питĕ йывăр пулнă. Халĕ ĕç пачах урăхла. Сталин юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмахра çапла палăртрĕ: «Халĕ, Китайпа Корейăран пуçласа Чехословакипе Венгри таран çĕнĕ «Ударнăй бригадăсем» — халăх демократи çĕршывĕсем пулса тăчĕç пулсан, халĕ пирĕн партие кĕрешме çăмăлрах ĕнтĕ, тата ĕç те хаваслăрах пулса пырать».

Тăванла партисен нумай йывăрлăхсене çĕнтерме тивет. Анчах вĕсене ĕçлеме вырăс коммунисчĕсене патша вăхăтĕнче ĕçлеме йывăр пулнă пекех йывăр мар ĕнтĕ. Капитализмлă çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсене кĕрешме çăмăлтарах пулни мĕнрен килет-ха? Пĕррĕмĕшĕнчен, вĕсен куçĕ умĕнче Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсенчи кĕрешӳпе çитĕнӳсен лайăх тĕслĕхĕсем пур. Иккĕмĕшĕнчен, буржуази хăй те, — ирĕклĕхшĕн пыракан юхăмăн тĕп тăшманĕ, — урăхланчĕ, питĕ нумай улшăнчĕ, вăл тата та реакциллĕрех пулса тăчĕ, халăхран уйрăлса кайрĕ, çапла вара хăйне вăйсăрлатрĕ.

Сталин юлташ çапла каларĕ: «Буржуалла-демократиллĕ ирĕклĕхсен ялавне аякка кăларса ывăтнă. Эпĕ çапла шутлатăп: эсир хăвăр тавра халăхăн ытларахăшне пухса пĕтĕçтерес тетĕр пулсан, çав ялава сирĕн, коммунистла тата демократиллĕ партисен представителĕсен, çĕклемелле пулать. Урăх ăна никам та çĕклекен çук».

Занятире пурĕ тăватă çын тухса каларĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, заняти идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртрĕ. Çавăнпа пĕрлех çакна та палăртмалла: пролетариллĕ интернационализм идейисене занятире тĕплĕрех çутатса памаллаччĕ, Сталин юлташăн сăмахĕ çинчен каланă чухне тĕслĕхсем ытларах илсе кăтартмаллаччĕ.

Паллă ĕнтĕ, Совет Союзĕ миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешес ĕçре малти ретре пырать. Пирĕн парти ССР Союзĕнче коммунизмлă общество тăвассишĕн кĕрешет. Çапла майпа вăл пĕтĕм этемлĕхе телейлĕ пурнăç тумалли çула кăтартса парать. Коммунизм тăвас задача пĕтĕм тĕнчери мире тата хăрушсăрлăха çирĕплетме хушать. ССР Союзĕнчи рабочи класс, тенĕ Сталин юлташ, пĕтĕм тĕнчери рабочи класăн пайĕ пулса тăрать. Коммунизм строительствинче пирĕн çĕршыв тунă çитĕнӳсем ытти çĕршывсенчи ĕçсыннисене миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешме хавхалантараççĕ. Сталин юлташ съездра çапла каларĕ: «пирĕн партин интересĕсем мире юратакан халăхсен интересĕсене хирĕç пымаççĕ кăна мар, пачах урăхла, вĕсемпе тачă пĕтĕçсе тăраççĕ. Совет Союзне илес пулсан, унăн интересĕсене пĕтĕм тĕнчери мир ĕçĕнчен уйăрма çук».

Çулпуçăн çак сăмахĕсем çинчен занятире тĕплĕрех чарăнса тăмаллаччĕ.

Сталин юлташăн сăмахне кружоксенче вĕренмелле туни пропагандист ответлăхне малалла ӳстерет. Çавăнпа та ку занятисене кашни пропагандистăн тĕплĕн хатĕрленмелле. Пирĕн шутпа, Маркова пропагандист опычĕ ыттисене чылай енчен усăллă пулма пултарать.

Е. СЕМЕНОВ.

Çуракине хатĕрленес ĕçе куллен вăйлатса пырар!

ВАРЛĂХ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

1953 çулхи январĕн 20-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Районсем	Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши тырăсем (вăкăсăр пуçне)	Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши сортлă тырăсем	Çурхи тулă	Нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕ	Районсем	Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши тырăсем (вăкăсăр пуçне)	Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши сортлă тырăсем	Çурхи тулă	Нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕ
Улатăр	109,5	109,5	101	90,4	Чкаловски	97	86,4	111,6	53,7
Йĕпреç	108,3	97,6	106,7	65,5	Вăрнар	96,9	92,7	109,8	73,8
Калинино	106,1	97,7	101	64,1	Комсомольски	96,9	90	104,2	81,4
Шăмăршă	103,7	67,8	102,3	16,8	Вăрмар	96,3	89,6	98	81,2
Сĕнтĕрвăрри	101,5	85,1	122,9	16,1	Тăвай	96,1	90,3	100,6	89,5
Елчĕк	101,3	101,3	99,7	97,4	Çĕмĕрле	95,1	80,2	99,2	27,2
Первомайски	100,3	88,6	102,4	67,4	Шупашкар	93,3	68,4	105	41,7
Муркаш	100,2	74,1	106,2	25,8	Советски	93,1	77,2	97,5	44,6
Октябрьски	100,2	72,9	102,1	37,5	Куславкка	92,7	79,4	118,8	25,2
Ишлей	100,1	67,5	104,4	38,7	Кувакино	92,6	86,1	99,7	28,1
Канаш	100	82,1	103,6	45,1	Хĕрлĕ Чутай	91	63,5	87,3	24,4
Сĕнтĕр	100	92,6	110,8	80,4	Элĕк	90,1	77,5	100	31,4
Шăхасан	100	75,1	97,5	89,7	Чурачăк	90	80,2	104,8	40,1
Етĕрне	100	86,7	105,5	50,5	Пăрачкав	87,4	85,3	98,7	46,5
Красноармейски	99,6	87,3	99,8	49,6	Çĕрпÿ	71,3	56,1	88,7	51,7

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

1953 çулхи январĕн 20-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

МТС-сем	Тракторсем юсанă	МТС-сем	Тракторсем юсанă
Сĕнтĕр	69,7	Муркаш	45
Пăрачкав	65,2	Тăвай	40,9
Йĕпреç	64,6	Вăрмар	40,5
Çĕмĕрле	58,5	Октябрьски	40,4
Комсомольски	58,3	Куславкка	40
Элĕк	54,3	Первомайски	40
Чкаловски	52,1	Советски	39,3
Вăрнар	50	Калинино	38,5
Шăхасан	50	Çĕрпÿ	36,8
Улатăр	48,4	Сĕнтĕрвăрри	36,1
Шупашкар	46,8	Ишлей	33,3
Елчĕк	46,8	Етĕрне	33,3
Канаш	46,1	Чурачăк	32,1
Шăмăршă	45,9	Красноармейски	30,2
Кувакино	45,8	Сиява	29,4
Сурмайдан	45,2	Хĕрлĕ Чутай	23,2

Социализмлă ăмăрту вăйланса пырать

МТС-сенчен КИЛНĔ ХЫПАРСЕМ

СЕНТЕР. (Телефонпа). МТС работникĕсен республикăри канашлăвĕ чĕнсе калани тата Пăрачкав машина-трактор станцийĕ тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене вырăнти Советсен суйлав кунĕ тĕлне юсаса пĕтерме социализмлă обязательство илни пирĕн трактористсемпе юсаври рабочисен ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерме пулăшрĕ. МТС коллективĕ январĕн 20-мĕшĕ тĕлне тракторсем юсамалли çулталăкри плана 70 процента яхăн тултарчĕ, тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене 60 процент юсанă.

Ĕç хĕрсех пырать. Юсамалли юлашки 12 трактора мастерскоя илсе пынă. Механизаторсем вĕсене февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме сăмах пачĕç.

А. Патушкин юлташ ертсе пыракан бригадăри тракторсене пĕтĕмпех юсаса кăларнă. Çак бригадăри трактористсем халĕ колхозсене удобренисем хатĕрлеме пулăшаççĕ. Вĕсем «Колос» колхоз валли тракторпа Шупашкартан минераллă удобренисем турттараççĕ, уйрăм колхозсенче хире 700 центнер тислĕк кăларнă. Бригада январьте колхозсене 700 тонна удобрени хатĕрлесе пама обязательство илнĕ.

МТС механизаторĕсем тăватă колхозра выльăх-чĕрлĕх фермисем валли силосорезкăсемпе 3.140 центнер улăм вĕтетсе пачĕç.

Тракторсемпе ытти машинăсене пысăк пахалăхпа юсаса, кăçал механизаторсем кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 500 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тăвассишĕн, колхоз хирĕсенче гектартан 18 центнертан кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

А. ВЯЗОВ,
МТС директорĕ.

* * *

ЭЛĔК. (Телефонпа). МТС механизаторĕсем вырăнти Советсен суйлавĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура çĕнĕ çитĕнÿсем тăвас ĕмĕтпе пурăнаççĕ. Мастерскойри рабочисенчен тата трактористсенчен чылайăшĕ ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ. Акă, В. Милов, Н. Семьянин токарьсем кулленхи нормăна 150—160-шар процент пурнăçлаççĕ. Л. Шумилов тата О. Демидов механиксене уйрăмах палăртмалла. Вĕсем хăйсене паракан заданисене яланах ирттерсе пурнăçласа параççĕ.

МТС тракторсене февралĕн 22-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме йышăннă.

Машина-трактор станцин трактористсем А. Васильев тата В. Антонов юлташсем ДТ-54 тракторпа «Дружба» колхоз уй-хирне торф кăлараççĕ. Вĕсем обязательствăна çуррине яхăн пурнăçларĕç те ĕнтĕ, пĕтĕмпе 1.000 тонна торф турттарса памалла.

Эпир Чкалов ячĕпе тăракан колхоза тракторпа строй материал 103 фестметр кăларса патăмăр. Вăл вите-карта тума каять.

Çывăх кунсенче «Динамо» колхоза 50 тонна минераллă удобрени, «За мир» колхоза торф чылай турттарса пама палăртнă. Çав ĕçсем вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешÿре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Кăçал МТС коллективĕ хăй ĕçлекен колхозсенче кашни гектартан 18 центнертан кая мар тĕштырă çитĕнтерсе парас тĕлĕшпе социализмлă обязательство илнĕ.

А. БЫКОВ,
МТС директорĕ.

* * *

ТĂВАЙ. Машина-трактор станцийĕнчи механизаторсем республикăри механизаторсен канашлăвĕ чĕнсе каланине пĕр кăмăлтан ырласа йышăнчĕç.

Трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсемпе комбайнеркăсем, механиксем тата МТС-ăн ытти работникĕсем, партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсемпе тата Сталин юлташ съездра тухса каланă историллĕ сăмахпа хавхаланса, социализмлă ăмăртăва хутшăнса çакăн пек социализмлă обязательствăсем илчĕç:

1953 çулта тракторпа тумалли ĕçсен калăпăшне, 1952 çулхипе танлаштарсан, 30—35 процент ÿстермелле;

МТС коллективĕ, Пăрачкав МТС механизаторĕсен примерĕпе, вырăнти Советсен суйлавĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ, тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене срокчен тата пысăк пахалăхпа юсаса çитерессишĕн кĕрешет. Данилов, Альгеев, Чиканов, Куприянов юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем тракторсене суйлав кунĕ тĕлне юсаса çитерме сăмах пачĕç.

Тăвай МТС работникĕсем 1953 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк пахалăхпа ирттерес тĕлĕшпе Вăрмар МТС-ĕн механизаторĕсене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Суйлав умĕнхи çĕкленÿ

ЕЛЧĔК. «КИМ» колхоз членĕсем ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсене суйлама хатĕрленеççĕ. Клубра агитпункт ĕçлет. Урамсенче, обществăллă çуртсенче вырăнти Советсен суйлавĕ çинчен калакан, суйлава çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме чĕнекен лозунгсемпе плакатсем курăнаççĕ. Агитаторсем колхозниксене суйлав законне ăнлантарса параççĕ. Сталинла Конституци çирĕплетсе панă правăсемпе туллин усă курма чĕнеççĕ.

Халĕ, суйлав умĕнхи кунсенче, колхозниксем тимлĕрех ĕçлесе çитĕнÿсем тума тăрăшаççĕ. Çитес çуракинче акма вăрлăхсене сортласа тасатрĕç. А. Сорокинпа Г. Мурзаков тимĕрçĕсем юлашки машинăсене юсаççĕ. Юсанă машинăсене атарласа машинăсем лартма тунă сарайне тирпейлесе лартнă. Ялти комсомолецсемпе çамрăксем вырăнти удобренисем пухса хатĕрлес ĕçе пуçарса пыраççĕ. Фермăсенчен тислĕк кăларса пысăк купасене хываççĕ. Фермăра ĕçлекен колхозниксем выльăхсене пăхас ĕçе лайăхлатрĕç.

Суйлав кунне колхозниксем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитнипе тата государство валли вăрман касса хатĕрлемелли плана тултарнипе паллă тума хатĕрленеççĕ. Халĕ вăрманта кулленех 40 колхозник ĕçлет, вĕсем хушшинче 14 комсомолец.

Н МЫШКИН.

Урăх çĕршывсенче Ленин кунĕсене паллă туни

ПОЛЬША

ВАРШАВА, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Польша халăхĕ пĕтĕм тĕнчери ĕçсынни массисен аслăран та аслă çулпуçĕне учительне, Коммунистсен партийĕпе Совет государствин никĕсне хывнă çынна — В. И. Ленина хисеплесе асăнать.

Паян Польшăн центрта тухса тăракан мĕнпур хаçачĕсем, Владимир Ильич вилнĕренпе 29 çул тултарнине асăнса, пĕрремĕш страницăсенче материалсем пичетленĕ. «Трибуна люду», «Глос працы», «Жицĕ Варшавы» тата центрта тухса тăракан ытти хаçатсем умстатьясемпе редакци çырнă статьясем, çавăн пекех Владимир Ильич Ленинăн пысăк портречĕсене пичетлесе кăларнă.

Заголовоксенче çакна паллă тунă: В. И. Ленинăн генилле кăтартăвĕсем Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕпе пĕтĕм Польша халăхне çул кăтартса пыраççĕ. Ленинăн аслă сăнарĕ яланлăхах Польша халăхĕпе Советсен аслă çĕршывĕнчи халăхсем хушшинчи тăванлăхăн тата туслăхăн символĕ пулса юлĕ.

«Трибуна люду» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать:

Ленин вилĕмсĕр. Вăл вилĕмсĕр, мĕншĕн тесен Ленин пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен чĕрисенче пурăнать. Ленин вилĕмсĕр, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă этемлĕхе çĕнĕ пурнăç патне пымалли çула — эксплуатацисĕр тата эксплуататорсемсĕр, вăрçăсăр тата халăхсен пусмăрсăр пурнăçĕн çулне кăтартса панă.

Пĕтĕм тĕнчери халăхсем, тесе çырать хаçат, Ленин ĕçне малалла туса пыракан аслă çын — Иосиф Сталин тавра пĕрлешеççĕ. Сталин ячĕ пĕтĕм тĕнчере ленинизм идейисем çĕнтернин символĕ пулса тăрать.

Польшăри мĕнпур хаçатсем çавăн пекех В. И. Ленин вилнĕренпе 29 çул тултарнине асăнса ĕнер Варшавăра пулса иртнĕ хурлăхлă-чаплă лару çинчен çырнă отчета пичетлесе кăларнă.

БОЛГАРИ

СОФИЯ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Болгарири мĕнпур хаçатсем В. И. Ленин вилнĕренпе 29 çул тултарнине анлăн паллă тăваççĕ. Хаçатсем В. И. Ленинăн пысăк портречĕсене, совет художникĕсен картинисенчен ÿкерсе илнĕ картинăсене, В. И. Ленина хисеплесе асăнса çырнă тата Ленин хушса хăварнисем Совет Союзĕнче, халăх демократи çĕршывĕсенче пурнăça кĕрсе пыни çинчен çырнă сăвăсемпе статьясене пичетлесе кăларнă.

«Работническо дело» хаçат «Ленинизм идейисен чаплă çĕнтерĕвĕ» ятлă умстатьяра çапла çырать:

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем В. И. Ленин — Коммунистсен партийĕпе Совет Союзĕн никĕсне хывнă çын, никам çĕнтерейми Советлă Социализмлă государство туса хунă çын вилнĕренпе 29 çул тултарнине паллă тăваççĕ.

В. И. Ленин ячĕ мĕнпур ĕçсыннисемшĕн тата пĕтĕм тĕнчери пусмăрта пурăнакан çынсемшĕн чи юратнă ят пулса тăчĕ.

Ленинизмăн питĕ чаплă вĕрентĕвĕ тĕнчери миллионшар çынсене хумхантарать тата хăйĕн ялавĕ айне чĕнет. Ленинизм вĕрентĕвĕ халăхсен кун-çулĕ çине питĕ пысăк влияни парать. Этемлĕх историйĕнче ленинизм вĕрентĕвĕнчен вăйлăрах вĕрентÿ пулман-ха, тесе çырать хаçат. В. И. Ленинăн вилĕмсĕр ĕçне малалла туса пыракан Сталин ленинизмăн идейисене пуянлатнă тата аталантарнă. Çав пурне те çĕнтерекен идейăсене миллионлă массăсем, Хĕвелтухăçĕнчен пуçласа Хĕвеланăçĕ таран, Çурçĕртен пуçласа Кăнтăр таран вĕренеççĕ. Ленинизм идейисем питĕ пысăк материальнăй вăй пулса тăчĕç.

КИТАЙ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ

ШАНХАЙ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Владимир Ильич вилнĕренпе 29 çул тултарнине асăнса, Шанхайри мĕнпур хаçатсем паян статьясем пичетлесе кăларнă.

«Вэньгуйбао» хаçат «Ленин кăтартса панă çулпа» ятлă статьяра çапла çырать:

Китай Халăхĕ Ленин кунĕсене уйрăммăнах юратса тата хисеплесе паллă тăвать. Вăл Ленин кăтартса панă çулпа çирĕппĕн утать, халĕ, пирĕн тăван çĕршыв экономикăллă строительствăна анлăн туса пыма пуçланă чухне, Ленинăн революцилле ĕçĕсем уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ.

Китай халăхĕ ирĕке тухнă хыççăн виçĕ çул хушшинче ялхуçалăхне аталантарас çĕрте питĕ пысăк çитĕнÿсем турĕ. Пĕтĕм çĕршывĕпех ĕçре пĕр-пĕрне пулăшакан бригадăсем ÿсеççĕ тата аталанаççĕ. Халĕ пирĕн умра çакăн пек задача тăрать: ку бригадăсене производствăллă кооперативсен шайне, ун хыççăн — колхозсен шайне çитермелле.

Ленин вилнĕренпе 29 çул иртрĕ. Анчах Ленин ĕçĕ тата пурне те çĕнтерекен Ленин идейисем çĕр чăмăрĕ çинчи миллионшар çынсен чĕрисенче халĕ те пурăнаççĕ. Хăй вăхăтĕнче Ленин, малашнехине генилле курса тăрса, çапла вĕрентнĕ: коммунизм вăл Совет влаçĕ тата пĕтĕм çĕршыва электрификацилени пулать, тенĕ. Халĕ эпир çакна куратпăр: аслă Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ çĕршыва электрификацилес тĕлĕшпе пысăк ĕç турĕ. Электричество çути Советсен çĕршывĕн питĕ пысăк çĕр лаптăкне çутатать. Ку çутă Азипе Европăри çĕршывсенчи нумай халăхсене чĕнсе калакан маяк пулса тăрать. Ленинăн генийĕ çутатса тăракан çак çулпа, чечекленÿпе прогресс çулĕпе Китай халăхне Мао Цзедун председатель ертсе пырать.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИ

БЕРЛИН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Берлинра Фридрихштадт-Паласта çуртĕнче Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн тата Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Пысăк Берлинри организацийĕн руководствин хурлăхлă-чаплă пухăвĕ пулса иртнĕ. Ăна Владимир Ильич вилнĕренпе 29 çул тултарнине асăнса иртнерĕ.

Президиумри вырăнсене Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюровĕн членĕсемпе кандидачĕсем, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн председателĕ Вильгельм Пик тата Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн генеральнăй секретарĕ Вальтер Ульбрихт йышăннă.

Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюровĕн членĕн кандидачĕ Антон Аккерман Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 29 çул тултарни çинчен доклад туса панă. Хăйĕн докладĕнче Аккерман çапла каланă: «Пирĕн нимĕç халăхĕ аслă совет халăхĕпе тата мĕнпур прогрессивлă этемлĕхпе пĕрле Ленин юлташа чĕререн хисеплесе асăнать, çак сехетре вăл Маркс — Энгельс — Ленинăн тата Сталинăн вилĕмсĕр ĕçне чĕререн парăнса тăни çинчен пĕлтерет».

Оратор хăйĕн докладне çак сăмахсемпе вĕçленĕ: «Маркспа Энгельсăн, Ленинпа Сталинăн ялавĕ айĕнче, мирпе демократи тата социализм ĕçĕ çĕнтерĕвĕшĕн — малалла! Сывă пултăр ленинизм! Сывă пултăр мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисен учителĕпе çулпуçĕ Иосиф Сталин!». Çак сăмахсене залри çынсем нумайччен тăвăллăн алă çупса ырланă.

ВЕНГРИ

БУДАПЕШТ, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри халăхĕ революцин аслăран та аслă генийĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 29 çул тултăрнине паллă тунă. Хуласемпе ялсенчи ĕçсыннисем, предприяти коллективĕсем тата Венгрири производствăллă кооператив коллективĕсем В. И. Ленин вилнине асăнса хурлăхлă-чаплă ларусемпе пухусем иртнерĕ.

АЛБАНИ

ТИРАНА, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Тирана хулинчи Халăх театрĕнче хурлăхлă-чаплă лару пулса иртнĕ. Ăна Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 29 çул тултарнине асăнса иртнерĕ. Ларура Албанири Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн генеральнăй секретарĕ, Албанири Министрсен Совечĕн председателĕ Энвер Ходжа, Халăх пухăвĕн Президиумĕн председателĕ Омер Нишани, Албанири Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюровĕн членĕсем, правительствăпа Халăх пухăвĕн Президиумĕн членĕсем, массăллă тата обществăллă организацисен представителĕсем, çавăн пекех Совет Союзĕн Тиранăри посланникĕ К. Д. Левычкин тата халăх демократи çĕршывĕсенчи дипломати представителĕсем пулнă.

Албанири Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕ, «Зери и популлит» хаçатăн главнăй редакторĕ Фадиль Пачрами В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен доклад туса панă.

В. И. Ленина хисеплесе асăнса çĕршыври мĕнпур район центрĕсенче хурлăхлă-чаплă ларусем иртнерĕ.

ШВЕЦИ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). В. И. Ленин вилнĕренпе 29 çул тултарнине асăнса ĕнер Стокгольмра «Швеци—СССР» ятлă общество членĕсем хурлăхлă-чаплă лару иртнерĕ.

Общество правленийĕн председателĕ Нильс Сильвершельд ларура В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа панă. Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем, тенĕ вăл, В. И. Ленина чун-чĕререн юратаççĕ.

Общество правленийĕн членĕ К. Крюсе Совет Союзĕнчи коммунизмăн аслă стройкисем çинчен, совет халăхĕ Ленин хушса хăварнисене пурнăça кĕртсе пыни çинчен каласа панă.

Ларура Швеци общественноçĕн представителĕсем, çавăн пекех, Совет Союзĕн Швецири вăхăтлăх повереннăйĕ П. К. Ермошкин, Китай Халăх Республикин тата халăх демократи çĕршывĕсен дипломатиллĕ представителĕсем пулнă.

БЕЛЬГИ

БРЮССЕЛЬ, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Драпо руж» хаçат «Ленин вилнĕренпе 29 çул иртнĕ хыççăн» ятлă умстатьяра çапла çырать: «Ленинизм совет халăхне коммунизм тума çул кăтартса пырать. Ленинизм халăх демократи çĕршывĕсенче, çĕнĕ Китайра пурăнать тата çĕнтерет, вăл наци ирĕклĕхĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери коммунистла юхăма аталантарнă çĕрте тунă çитĕнÿсенче палăрать...

Этемлĕх малалла пынине нимен те тытса чараймĕ».

ИНДИ

ДЕЛИ, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Свадхината» хаçат январĕн 21-мĕшĕнче тухнă номере Владимир Ильич Ленина асăнса кăларнă. Хаçат В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартса паракан фотоÿкерчĕксем, çавăн пекех Инди писателĕсем В. И. Ленинпа унăн ĕçне туса пыракан аслă çын—Сталин юлташ çинчен çырнă статьясене пичетленĕ.

ИРАН

ТЕГЕРАН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Иранри прогрессивлă «Бесуе аянде» хаçат В. И. Ленин вилнĕренпе 29 çул тултарнине асăнса пичетленĕ статьяра çапла çырать:

«Ленинччен истори ун пек çулпуçа пĕлмен. Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемпе мĕнпур простой çынсем Ленина чĕререн юратаççĕ. Миллионшар ĕçсыннисемпе простой çынсем—миршĕн, наци никама пăхăнманлăхĕшĕн тата демократишĕн тÿрĕ кăмăлпа кĕрешекенсем—аслă Ленин кăтартса панă çулпа пыраççĕ.. Халăхсем Ленина яланах асăнаççĕ. Ленинăн идейисемпе вĕрентĕвĕ çĕнтернĕ, çĕнтереççĕ малашне те çĕнтерĕç».

ФИНЛЯНДИ

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 22-мĕшĕ (ТАСС). В. И. Ленин вилнĕренпе 29 çул тултарнине асăнса ĕнер Тампере хулинче, Ленин музейĕнче хурлăхлă-чаплă лару иртнерĕ. «Финлянди—Совет Союзĕ» ятлă обществăн генеральнăй секретарĕ Тойво Карвонен доклад туса панă. Вăл Совет государствине туса хунă тата çирĕплетнĕ çĕрте Ленин мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен каланă. Докладчик çакна паллă тунă: Ленин паян та мĕнпур прогрессивлă этемлĕхĕн ĕçĕсемпе кĕрешĕвĕнче пурăнать. Ленинпа Сталин Финляндие хăй тĕллĕн пурăнмалли çула, Финлянди, Совет Союзĕпе туслă çыхăну тытсан хăйĕн ирĕклĕхĕпе мирлĕ пуласлăхне тума пултармалли çула кăтартса панă.

Американецсен çĕнĕ провокацийĕ

Китайăн сывлăшри чиккисене пăсни

ПЕКИН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Мукденран çапла пĕлтерет:

Январĕн 12-мĕшĕнче каçхине Китай халăх добровольцĕсем Американ «ЯВ-29» йышши самолетне персе ÿкернĕ. Вăл самолет Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайăн чикки урлă вĕçсе каçнă пулнă. Экипаж членĕсенчен нумайăшне тыткăна илнĕ.

Американ çак самолечĕ январĕн 12-мĕшĕнче каçхине 5 сехет те 30 минутра Иокота аэродромĕнчен (Япони) сывлăша çĕкленнĕ, каçхине 9 сехет те 15 минутра Аньдун районĕ енчен Китайăн чикки урлă вĕçсе каçнă.

Китайăн сывлăш-çар вăйĕсем çийĕнчех самолет çулне пÿлнĕ, Улунпэй чугун çул станцийĕ çывăхĕнче, Аньдунран 15 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вара самолета персе ÿкернĕ.

Ку самолетăн номерĕ—«КВ-229» 44-62. 217.

Тыткăна лекнисем кăтартса панă тăрăх, ку самолет «В-29» йышши бомбардировщикран çĕнетсе тунă самолет пулса тăрать. Унпа оперативлă разведкăра, шпионсем пăрахнă çĕрте тата çыхăну тытма усă кураççĕ. Ку самолет малтанхи вăхăтра Американ 13-мĕш авиасоединенийĕн 581-мĕш авиаполкĕн составĕнче пулнă. 1952 çулхи декабрь уйăхĕнче самолета Японири Иокота аэродромне куçарнă, унта ăна оперативлă разведка тăвакан 91-мĕш эскадрилья сумне çирĕплетнĕ. 581-мĕш авиаполкăн тĕп тĕллевĕ çыхăну тытасси тата психологилле вăрçă туса пырасси пулать.

Самолета персе тивретнĕ хыççăн, унта пулнă 14 çын парашютпа сикнĕ, вĕсенчен 11-шне тыткăна илнĕ, виççĕшĕ ÿксе вилнĕ. Тыткăна лекнисем хушшинче çаксем пур: Американ 13-мĕш авиасоединенийĕнчи 581-мĕш авиаполкăн командирĕ—полковник Джон Нокс Арнольд-кĕçĕнни, унăн номерĕ 1.212 А, оперативлă разведка тăвакан 91-мĕш эскадрильăн вĕçме тата çар ĕçне вĕрентекен пайĕн начальникĕ Уильям Х. Баумер майор, унăн номерĕ АО 733.786, Юджи Джон Ивали капитан, унăн номерĕ АО 825.008.

Американ çакă «КВ-29» йышши самолечĕ стратеги тĕлĕшĕнчен преступникла тĕллевпе Китайăн чикки урлă вĕçсе каçнисĕр пуçне, Американ Корейăри самолечĕсем юлашки икĕ уйăх хушшинче Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайăн чикки урлă нумай хутчен вĕçсе каçнă. 1952 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче, декабрĕн 8-мĕшĕпе 13-мĕшĕнче вара хуласем çине бомбăсем пăрахнă, нумай çынсене вĕлернĕ, тата амантнă.

Америка агрессорĕсем, тенĕ Синьхуа агентстви пĕлтернинче, Китайăн сывлăшри чиккисене тăтăшах пăсаççĕ, Китай çыннисене вĕлереççĕ тата амантаççĕ, Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайра çар тĕлĕшĕнчен разведка тума уççăнах хăйсен самолечĕсене яраççĕ. Аньдун çывăхĕнче персе ÿкернĕ самолетăн ванчăкĕсем тата Американ сывлăш-çар вăйĕсен тыткăна лекнĕ персоналĕ американецсем преступлени тунине—Китайăн сывлăшри чиккисене пăсса Корейăри вăрçа сарса пыма активлăн хатĕрленнине уççăн çирĕплетсе параççĕ. Китай халăхĕ кун пек ирсĕр ĕçсемпе килĕшме пултараймасть. Американецсем хăйсен ирсĕр ĕçĕсемшĕн ответ тытма тивĕçлĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ январĕн 21-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем мĕнпур фронтсенче Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç артиллерирен персе тăнă.

Ĕнер Халăх çарĕн соединенийĕсем Унчжинь çурутравĕн хĕвеланăç çыранĕн районĕнче тăшманăн пĕр тральщикне шыва путарнă. Вăл тральщик çурутрав çинчи мирлĕ халăх пурăнакан ялсем çине тискеррĕн персе тăнă пулнă.

Ĕнер çĕрле Американ сывлăшри вăрăхурахĕсем, «В-29» йышши бомбардировщиксемпе усă курса, мирлĕ халăх пурăнакан Хамхын хули çине, унта нимĕнле çар объекчĕсем çук пулин те, пырса тапăннă. Вут тивертекен, напалмлă тата фугаслă бомбăсем çĕршер пăрахнă. Çавна пула ватă çынсемпе хĕрарăмсем тата ачасем 2 пин çын ытла вилнĕ тата аманнă. Хулара пурăнакансем çуртсен ишĕлчĕкĕсем айĕнчен халĕ те вилесем чава-чава кăлараççĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 8 самолетне персе ÿкернĕ. Вăл самолетсем мирлĕ хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахнă çĕре хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх добровольцĕсен чăсĕсем Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç уйчченхи вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçнă.

Ĕнер çĕрле Американ сывлăшри вăрăхурахĕсем Вонсан çывăхĕнчи тата Аньбень районĕнчи мирлĕ халăх пурăнакан ялсем çине, унта нимĕнле çар объекчĕсем çук пулин те, тискеррĕн бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

Халăх çарĕн зенитнăй чăсĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

БРАЗИЛИРЕ МИРШĔН ТĂРАКАНСЕНЕ ХĔСĔРЛЕÇÇĔ

МОНТЕВИДЕО, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Бразилири «Импренса популар» хаçат Ресифе хулинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: çар влаçĕсем Рио Гранде-до-Норте штатĕнчи миршĕн тăракансен юхăмĕн руководительне Вилпиано Кавалканти врача малтанлăха тĕрмене хупасси çинчен декрет кăларнă.

САЛТАКСЕМ АМЕРИКА ÇАРĔНЧЕН ТАРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Арми нэйви эйрфорс джорнэл» журнал США-н çар ведомстви çĕнĕ директива кăларни çинчен пĕлтерет. Вăл директива тăрăх, çартан е çар тĕрминчен тухса тарнă кирек мĕнле çынна тытнăшăн е тытса чарнăшăн 15 доллар, вăл çынна çар влаçĕсене тытса панăшăн 25 доллар тÿлеççĕ. Директивăна хаçатсем США-н хĕçпăшаллă вăйĕсенчен таракансем нумай пулни çинчен пĕлтернĕ хыççăн йышăннă.

США-РИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО

ВАШИНГТОН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер США сеначĕ Эйзенхауэр кабинечĕн мĕнпур членĕсене, оборона министрĕсĕр пуçне, çирĕплетнĕ. 1947 çулхи закон тăрăх, çар министрĕ тата авиаци министрĕпе тинĕс министрĕсĕр пуçне пур министрсем те кабинет составне кĕреççĕ. Çар авиаци тата тинĕс министрĕсем оборона министрне пăхăнса тăраççĕ.

Государство секретарĕ пулма Джон Фостер Даллеса уйăрса лартнă. Дуглас Маккея—шалти ĕçсен министрĕ пулма, Джордж Хэмфрие — финанс министрĕ пулма, Герберт Браунелла—юстици министрĕ пулма, Эзра Бенсона—çĕрĕç министрĕ пулма, Синклер Уикса—суту-илÿ министрĕ пулма, Артур Саммерфилда—почта министрĕ пулма, Мартин Даркина—ĕç министрĕ пулма уйăрса лартнă.

Чарльз Эрвин Вильсона оборона министрĕ пулма уйăрса лартма Эйзенхауэр сĕнÿ панă пулнă. Анчах ку ыйтăва сенат пăхса тухман, мĕншĕн тесен сенатăн хĕçпăшаллă вăйсем енĕпе ĕçлекен комиссийĕн чылай членĕсем Вильсона министр пулма уйăрса лартассине хирĕç тăнă.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, январĕн 24 мĕшĕнче, вырăсла спектакль
«ВАС ВЫЗЫВАЕТ ТАЙМЫР»
ЧАСХИ:—вырăсла спектакль
«БОГАТЫРСКИЙ СКАЗ»
Спектакль 20 сехетре пуçланать.

«РОДИНА» КИНОТЕАТРТА
Паян, январĕн 24 мĕшĕнче, тата малашнехи кунсенче те
«САДКО»
Сеанссем 12, 14, 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра тата 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01229 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.